ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

47 (4409) №, 2014, ноябрь /чӳк/, 20
(1931 çулхи январĕн /кăрлачăн/ 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

ПУЛТАРУЛЛИСЕМ

## Ырă ĕç тăвасси – малти вырăнта



**Киев Руçĕнчи Игорь кнеçпе унăн арăмĕ Ольга çинчен пĕлетĕр вĕт-ха? Вырăс литературине лайăх вĕренекенсем вуланă. Ывăлĕн ятне ас тăватăр-и-ха? Тĕрĕсех, Святослав.**

Красноармейски районĕнчи Мăн Шетмĕ шкулĕнчи Святослав Сергеевпа паллашсан вуннăмĕш ĕмĕрти Киев Руçне лекмерĕм-ши тесе шухăшларăм. Ара, çак арçын ачан ашшĕпе амăшĕ те Игорьпе Ольга-çке. Ав епле интереслĕ пулса тухать! Историпе кăсăкланакан арçын ача çак ятсем çинчен ытларах та пĕлме тăрăшать.

– Ят пирки ăнлантарса çырнине вуласан, паллах, лайăххине çеç ĕненес килет, – тет вăл.

Святослав – питĕ хастар та пултаруллă ача. Шкулти пĕр ăмăртуран та, уявран та юлмасть. «Зарницăпа» «Орленок» вăййисене кашнинчех хутшăнать. Тавçăрулăхĕ пысăк. Темĕн те пĕр шухăшласа кăларма ăста.

Ăслăлăхпа интересленекенсенкере çĕнĕлĕхсем яланах илĕртеççĕ. Опыт туса ирттерме те кăмăллать вăл.

➲➲➲ 2-мĕш стр.

ÇĔНĔ ĂРУ

## Пилеш хыçĕнче пытанса юрлакан Илья



**Çиччĕмĕш класра вĕренекен Илья Шибаевăн пултарулăхĕ тĕрлĕ енлĕ. Спортра хастар, вĕренӳре малтисен ретĕнче, тус-юлташĕ хушшинче – хисепре. Ашшĕ-амăшне пулăшма ялан хавас. Шкултан киле таврăнать-и, урамра юр хырать е сарайĕнчи выльăхĕсене пăхать-и – ялан юрлать вăл. Тепĕр чух урокра та юрă сăмахĕсем канăç памаççĕ.**

Паян та килне çитсен сумкине тенкел çине лартрĕ те ĕçе тытăнчĕ. Аслисем ĕçрен таврăниччен тутлă апат пĕçерес тесе юратнă юррине юрлаюрла çĕрулми шуратма тытăнчĕ Илюш.

– Çăлтăр çуннă каçсенче
Хуп-хура сад пахчинче
Çулçă тăкнă йывăçсем
Хурланса юрланине
Тăтăм эпĕ итлесе
Пытанса пилеш хыçне.

Юрă ăна кирек епле ĕçре те хавхалантарать.

– Эх, хăвăртрах ӳсесчĕ, чăн-чăн артист пуласчĕ, – терĕ таса çĕрулмие шывра тепĕр хут çунă май.

Ĕмĕчĕ çав тери пысăк çав Ильян. Сцена илĕртет ăна. Пĕррехинче Шупашкарта иртнĕ поэзи фестивалĕнче Петĕр Хусанкай сăввисене илемлĕ вуласа пурне те тĕлĕнтерчĕ вăл. Хыççăнах ун патне пĕр хĕрарăм пычĕ те ыталаса илчĕ. Пусĕнчен шăлса ачашларĕ.

– Маттур ача эсĕ, Илюш! Пысăк çын пулатăнах ӳссен. Мăшăрăн сăввисене çав тери чуна пырса тивмелле вуларăн. Кусран куççуль та шăпăртатрĕ. Эпĕ Вера Кузьмина артистка пулатăп, Петĕр Хусанкай арăмĕ, – терĕ куçран шăтарасла пăхса. – Хамăн мăнук пек туйăнтăн эсĕ.

Ильяна çав тери ырă-ырă пулса кайрĕ. Асламăшĕпе кукамăшĕн ытамĕнче пулнă евĕрех. Ара, Хусанкай сăввисене çав тери кăмăллатьçке вăл. Анчах унăн мăшăрĕпе тĕл пуласса тĕлĕкре те тĕлленмен-иç!

– Вера Кузьминична, манăн сирĕн пек артист пулас килет, – терĕ сасартăк арçын ача хăюлăх çитерсе.

Вăл вара йăл кулчĕ:

– Ачам, ку хыпарпа савăнтаратăн. Ĕмĕтленни çиттĕрччĕ, пурнăçу тулăх пултăр, – терĕ халăх юратакан артистка.

Илюш паян та çав хавхаланупах пурăнать. Шкул, клуб сцени çинче спектакль выляса, юрă юрласа та ташланисĕр пуçне тĕлĕкре те халăха савăнтарать пек вăл.

*Луиза ВАСИЛЬЕВА.*

Йĕпреç районĕ,
Пучинке.
**АВТОР сăнӳкерчĕкĕ.**

1-мĕш стр.

# Ырă ĕç тăвасси – малти вырăнта

Святослав яланах ĕçре, пĕрре те ахаль лармасть. Выльăх-чĕрлĕх пăхма юратать. Техникăпа та туслă, унăн «кăмăлне» аван туять.

– Ĕненетĕр-и, техника та «кутăнланма» юратать. Хăш чухне хурçă ута хуть те мĕн ту – тапранмасть. Лайăх калаçнине вара вăл та ăнланать, – тет арçын ача.

Хăш чухне сăвă çырма кăмăллать вăл. Юлташĕсене сăнаса ларнă май пуçне рифмăллă йĕркесем килме тытăнаççĕ те вĕсене хут çине çырса хурать. Тусĕсенчен пĕри Игорь Егоров та çакнашкал ĕçпе аппаланать. Çавăнпа арçын ачасем час-часах иккĕшĕ пĕрле сăвă çыраççĕ: пĕри пуçлать, тепри вĕçлет.

Тахçан Святослав аслă тусĕнчен Саша Владимировран купăс калама вĕреннĕ. Халĕ класри тантăшĕсем те унран çак ăсталăх вăрттăнлăхне алла илме тăрăшаççĕ. Çамрăк купăсçă чăвашсен ĕлĕкхи юррисене ытларах кăмăллать. Çав вăхăтри композиторсем пурнăçа лайăххăн пĕлнĕ пек туйăнать ăна, кĕвĕре мĕн тери тарăн шухăш палăртма пултарни тĕлĕнтерет.

Ырă ĕç уншăн яланах малти вырăнта. Çывăх çыннисене кĕтмен парнепе савăнтарма кăмăллать вăл. Пилĕк çулта чухнех асламăшне тĕлĕнтерме тĕв тунă. Ĕни уйран таврăнсан никам куриччен витре илнĕ те витене тухнă.

– Мумук лайăххскер пулчĕ çав, мана ăнланчĕ тейĕн, – витрене ăшă сĕтпе тултарса кĕнине аса илет арçын ача.

# Сăвăра чуна уçма аван



Настя Васильева нумай пĕлме ăнтăлнипе пушă вăхăтне тăтăшах вулавăшра иртерет, кĕнеке тĕнчипе паллашать, интернетри тавра пĕлÿ сайчĕсенче «çулçÿрет». Классика тата фантастика хайлавĕ-сем пуринчен те ытларах килĕшеççĕ ăна. Çуллахи каникулта та алăран кĕнеке яман.

Тăрăшуллăскерĕн ĕмĕт чылай. Анчах чи малтанхи тĕллевĕ – шкултан лайăх вĕренсе тухасси. Халĕ Настя пурнăçăн аслă çулĕ çине тухма хатĕрленет вĕт-ха. Çавăнпа вĕрентекенсен кашни сăмахне тимлĕ итлет.

Амăшĕн аппăшĕ Настьăшăн тĕслĕх вырăнĕнче. Аслă пĕлÿ илнĕ вăл, çавăнпа хĕр ача та ун пекех тăрăшуллă пуласшăн. Пушă вăхăтра унран тĕрлеме те вĕренет. Çуралнă кун ячĕпе парнеленĕ тĕррине халĕ те юратса упрать. Çав вăхăтрах вăл вĕтĕ шăрçаран сулă е ытти капăрлăх ăсталама та маттур.

Настя сăвăра чунне уçма кăмăллать, мĕн канăç паманнине çапла çырса кăтартать те лăпкăлăх килнине туять. Çут çанталăка сăнама юратаканскер ешĕл тавралăх çинчен те илемлĕ йĕркесем шăрçалать. Çак чун киленĕçĕпе тăваттăмĕш класранпа туслă вăл. Сăвă вăрттăнлăхне ăнланма вара Светлана Васильевна Васильева вĕрентекен пулăшать.

– Пĕрремĕш сăввăмра хамăн пĕр кун мĕнле иртни çинчен çырнăччĕ. Ăна аннене кăтартрăм та вăл тÿрлетрĕ, хăйĕн сăмахĕсемпе пулăшкаларĕ, – тет маттур хĕрача. – Ман шутпа, кашни çын мĕн çинчен те пулин шухăшлать. Шăпах çав вăхăтра сăвă çырăнать. Тĕрлĕ пулăм куратăн, вăл кăсăклантарасан ăна ас туса юлас тесе çырса хуратăн. Савăнăçлă чухне ытларах сăвă çуралать. Шÿтлисене те хайлама кăмăллатăп.

Настя – класра «Антошка» журнала кăларакансенчен пĕри. Тусĕсем Каринăпа Александра та ăна çак ĕçре ялан пулăшаççĕ. Хĕрачасем унта класри интереслĕ самантсем çинчен çырса кăтартаççĕ, ÿкерчĕксемпе илемлетеççĕ.

«Тантăш» вулаканĕсене вара Настя хаçатпа тата туслăрах пулма, кашни страницине пĕр сиктермесĕр вулама сĕнет.

# «Асатте пек пуласчĕ...»



«Антошка» журнала кăларакан тепĕр хастар хĕрача Саша Александрова филологи чемпионачĕсенче тăтăшах палăрать. Вĕрентекенсен сĕнĕвĕсене яланах шута илет, малтан мала ăнтăлать.

– Ылтăн медальпе шкул пĕтересчĕ, аттестатра «5» паллă çеç пултăрччĕ. Кайран аслă шкулта пĕлÿ илсе хĕрлĕ дипломпа вĕренсе тухасчĕ, – палăртать çирĕп тĕллевлĕскер.

Спортпа та туслă. Алă вăйне виçес, чупас ăмăртусене пĕрре мар хутшăннă. Май пур чухне хăйĕн пултарулăхне тĕрлĕ енчен тĕрĕслесшĕн Саша.

– Пурнăçра асра юлмалли пулăм чылай. Кашни çулах класпа похода каятпăр. Унта пулă тытатпăр. Ытларах уланкă тата ыраш пăтри çакланаççĕ. Вĕсене кайран чăхсене çитеретпĕр, – хавасланса калаçать хĕрача.

Çынна курсан тÿрех пĕтĕмлетÿ тума васкамасть Шура, ăна лайăххăн пĕлме тăрăшать. Çывăх çынсене вара яланах савăнăçлă курасшăн. Çавăнпа вĕсем калани тимлĕ итлет, май пур таран пулăшать, ырăлăхĕпе кăмăлĕсене çĕклет. Мĕн те пулин ăнăçмасан хĕрача çакна йăлтах хăй татса пама хăнăхнă. Килтисене пур-çук сăлтавшăнах кулянтарас йăла çук унăн. Аслашшĕне Леонид Аверкиевич Авинова пĕлмен çын таврара çук. Саша та ун пекех ĕçчен, ырă ятлă пуласшăн.

# Амăшĕ çыхма, ашшĕ ÿкерме вĕрентнĕ



«Антошка» журналăн виççĕмĕш хастарçи – Карина Васильева. «Лайăх вĕренни пурнăçра питĕ кирлĕ», – теççĕ те ăна ашшĕпе амăшĕ хĕрача çак сăмахсене тĕпе хурса яланах малтисен ретĕнче пулма тăрăшать.

Йăмăкĕ Даша пиллĕкмĕш класра вĕренет. Хĕрачасем яланах пĕр-пĕрне пулăшаççĕ, пур ĕçе те пĕрле пурнăçлаççĕ. Çапах вĕсен уйрăмлăхсем те пур.

– Пирĕн кăсăкланусем урăххарах. Даша ÿкерме ытларах юратать, эпĕ вара алĕçĕпе аппаланатăп. Кĕçĕн классенче вĕреннĕ вăхăтрах анне ĕçленине пăхса унран хăнăхрăм çав, – тет Карина.

Халĕ вăл нуски те, тапăчки те çыхать. Кĕллине çавăрма йывăртарах, паллах. Анчах кунта амăшĕ пулăшать. Хĕрача епле тăрăшса ĕçленине кура тăванĕсем час-часах хăйсене мĕн те пулин çыхса пама ыйтаççĕ. Юлташĕсене те çакăн пек парнепе савăнтарать Карина.

Ÿкерме юратать вăл. Натюрмортпа ĕçлесси ытларах илĕртет. Ашшĕ те çак енĕпе ăста. Салтакра чухне альбомне çар çыннисене ÿкерсе илемлетнĕ. Хĕрне те тăтăшах хавхалантарать. Çавăнпа Карина ашшĕнчен тĕслĕх илсе çак пултарулăха аталантарма тăрăшать.

Красноармейски районĕ,
Мăн Шетмĕ шкулĕ.

*Страницăна Лариса ПЕТРОВА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.*

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
11466 - республика тулашĕнче.

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă."Чувашия" ИПК" ПУП типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
В.В.ТУРКАЙ

● ТЕЛЕФОНСЕМ

| | |
|---|---|
| директор-тĕп редактор: | 56-00-67 |
| редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: | 28-83-86 |
| шкул ачисен пайĕ: | 28-85-69 |
| спорт тата экологи пайĕ: | 56-11-80 |
| право, кăмăл-сипет пайĕ: | 28-83-89 |
| факс: | (8352) 56-15-30 |
| бухгалтери: | 28-83-64 |

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Н.ЦАРЫГИНА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1266 экз.
çав шутра Чăваш Республикин тулашĕнче – 191 экз.

● ЗАКАЗ
№ 4452
Пичете ноябрь уйăхĕн 19-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

# Хрюша, Степашка тата Филя — савӑнӑç парнелекенсем



Иртнӗ эрнере «Чи лайӑххи – ачасене» ыркӑмӑллӑх акцийӗпе килӗшӳллӗн Шупашкара Мускаври Останкинӑран «Спокойной ночи, малыши» телекӑларӑм сӑнарӗсем килнӗччӗ.

Чи малтанах ачасем каçсерен экран умӗнче чӑтӑмсӑр кӗтекен Хрюша, Степашка тата Филя Республикӑри ача-пӑча клиника больницинче пулчӗç, йывӑр чирлӗ ачасемпе пӗчӗк тӗлпулу ирттерчӗç, каласу йӗркелерӗç, ӗмӗт-тӗлевӗпе кӑсӑкланчӗç. Шӑпӑрлансенчен кам пулас текен кӑна çук-ши! Пӗри нумай çиме юратнӑран повар пуласшӑн, тепри хӑйне сыватакансене хисепленӗрен тухтӑр ӗçне суйласшӑн, малашлӑхра хӑйне инженер пек куракан та пур. «Телеертӳçӗ пулас шухӑшлисем пур-и кунта?» – кӑсӑкланчӗç телесӑнарсем. Çавӑнтах ӑсталӑх урокӗ пама васкарӗç: «Телеертӳçӗ ӗçне суйлас тесен сирӗн харсӑр пулмалла!»

Тӗл пулӑва пуçтарӑннӑ ачасене Хрюша, Степашка тата Филя парнесемпе (ӳкерӳ хатӗрӗсемпе) савӑнтарчӗç тата пысӑк ӗç хушрӗç: «Ачасем, кайран меллӗ самант тупӑнсан пире хут çине ӳкерӗр те ӗçӗрсене тухтӑрсене парӑр, вӗсем вара пирӗнпе çыхӑнӗç. Сирӗн ӳкерчӗксене илсен эпир вӗсене «Спокойной ночи, малыши» телекӑларӑмра кӑтартатпӑрах».

Çак сӑмахсене илтсен ачасем тата хавхаланчӗç, мӗншӗн тесен хутпа кӑранташ тата тӗрлӗрен сӑрӑ тытса ӗçлесси – вӗсен чун киленӗçӗ. Больница коридорӗнче ачасен ӳкерчӗкӗсенчен курав та хатӗрленӗ. Вӗсене сӑнанӑ май шӑпӑрлансем пурнӑçа мӗн тери юратнине асӑрхатӑн.

Элӗк районӗнчи Йӑлкӑш ялӗнчен килнӗ Никита Якимовпа амӑшӗ Надежда Ивановна та ӳкерчӗк хатӗрлеме шантарчӗç. Çак больницӑна Никита алӑ парезӗн чирне пула лекнӗ.

– Çулталӑкне икӗ-виçӗ хутчен больницӑра выртмалла, çак йӗркене пӑхӑнатпӑр. Халӗ Никитӑн алӑ пӳрнисем хускалма пуçларӗç ӗнтӗ, малашне тата ырӑ улшӑнусем пуласса шанатпӑр, – пӗлтерчӗ Надежда Ивановна.

Юратнӑ телесӑнарсем тухтӑрсене çӑмӑл мар ӗçӗшӗн тав турӗç. Ачасене вара хӑвӑртрах сывалма, çывхарса килекен çӗнӗ çула хаваслӑ кӑмӑл-туйӑмпа кӗтсе илме сунчӗç.

Каçхине Чӑваш патшалӑх оперӑпа балет театрӗнче «Хрюшоу – пысӑк концерт» иртрӗ. Юратнӑ телесӑнарсем Шупашкарта пилӗк çул каялла та пулнӑ. Татах килес шухӑш та пур-ха вӗсен.

***Виктория МАЙОРОВА.***

**Нина ЦАРЫГИНА сӑнӳкерчӗкӗсем.**



ШКУЛ ПРОГРАММИНЧЕН

# Кӑвар чӗреллӗ поэтӑмӑр

**Чӳк уйӑхӗнче кӑвар чӗреллӗ поэтӑмӑр Çеçпӗл Мишши çуралнӑранпа 115 çул çитрӗ. Ытла кӗске пулнӑ унӑн ӗмӗрӗ. Хӑйӗн пурнӑçне пултаруллӑ чӑваш каччи ахаль ирттермен, тӑван халӑхӗн пуласлӑхӗшӗн пӑшӑрханнӑ, сӑвӑ хыççӑн сӑвӑ шӑрçаланӑ.**

Çеçпӗл Мишши иртнӗ пурнӑçне хакласа кун кӗнекинче çакӑн пек çырса хӑварнӑ: «Манӑн иртнӗ пурнӑç виçӗ тапхӑртан тӑрать. Пӗрремӗш тапхӑр – 1911 çулхи июль уйӑхӗччен, – йывӑр чухӑнлӑхра иртнӗ пулсан та, вӑл ман çутӑ та таса ачалӑх. Иккӗмӗш тапхӑр вара – ытла та хаяр инкекпе, çемье пурнӑçӗнчи хӑрушла драмӑпа, аттене çухатнипе пуçланнӑскер – манӑн пурнӑçри чи тертлӗ те йывӑр тапхӑр; буржуалла йӗркен тем тӗрлӗ пусмӑрне те тӳссе курнӑскер, эпӗ 1918 çула хам пурнӑçӑн виççӗмӗш тапхӑрӗ пуçланнипе – компартине кӗнипе вӗçлерӗм. Партие кӗрсен эпӗ, çемье, тӗн тата кивӗ пурнӑçран юлнӑ киревсӗр йӑла-йӗрке тыткӑнӗнчен, хама ирӗклӗ те вӑйлӑ туякан пултӑм, пролетариатпа пӗрле чӑн-чӑн пурнӑç хуçи пек туйса илтӗм. Çавӑнтанпа ман ӑс-тӑн уçӑ. Шухӑшсем хӑватлӑ, эпӗ – коммунист».

Шкул программи тӑрӑх эпир уроксенче унӑн произведенийӗсене тишкеретпӗр. Поэт ӗçӗ-хӗлӗпе паллашатпӑр. Çеçпӗл Мишши – пултаруллӑ поэт, поэт-кӗрешӳçӗ. Вӑл хастарлӑ, хыт утӑмлӑ, юриспруденцие лайӑх пӗлекен, тӑван халӑхне, чӗлхине чунтан юратакан çын пулнӑ.

Судпа следстви органӗсенче Çеçпӗл Мишши Мускавра инструкторсемпе агитаторсен курсӗнчен вӗренсе тухсан 1919 çулхи майӑн 22-мӗшӗнче ӗçлеме тытӑннӑ. Çӑмӑл пулман çирӗм çул та тултарман çамрӑк çынна йӗркелӗхе тата саккунлӑха хӳтӗлеме. Çӗрне-кунне пӑхмасӑр ӗçленӗ вӑл унта.

Çирӗм пӗр çул тултарса пыракан Михаил Кузьмин пӗтӗм Чӑваш автономи облаçӗнчи тӗрӗслӗх сучӗн пуçлӑхӗ пулса тӑрать. Пур ӗçе те тӗплӗн тума хӑнӑхнӑ Çеçпӗле пуринчен те хытӑ ыйтнӑ. Çавӑншӑн ӑна хисепленӗ, пысӑка хурса хакланӑ. Ӑна шаннӑ. Çамрӑксемпе ытларах ӗçлекенскере часах Чӑваш комсомол обкомӗн членӗ пулма çирӗплетнӗ.

Анчах пурнӑç урапи ялан пӗр йӗрпе пымасть. 1920 çулхи декабрь уйӑхӗнче нӳрӗ путвалта паракан Çеçпӗле, çын вырӑнне хумасӑр, допрос çине допрос ирттерсе асаплантарнӑ. Ним айӑпсӑр çын хӗрӗх виçӗ кун тӗрмере ларнӑ. Вӑл поэтӑн чунне ӗмӗрлӗхех амантнӑ, сывлӑхне хавшатнӑ. Çеçпӗл «ӗçне» тӗплӗн пӑхса тухнӑ хыççӑн вӑл айӑпсӑррине палӑртнӑ. Сывлӑхне çирӗплетмешкӗн ӑна Евпатори курортне кайма ирӗк параççӗ.

Санаторире те Çеçпӗл Мишши вӑхӑта ахаль ирттермен. Чунтан шӑранса тухакан хӗрӳллӗ сӑвӑсем чылай çырнӑ.

Ревтрибунал председателӗ, юстици пайӗн пуçлӑхӗ пулнӑ çынна пӗр сӑлтавсӑр айӑпланӑ, çӳлти картлашкаран аялалла ывӑтнӑ. Çавна пула тӗрмере ларнӑ чухне вӑл хӑй çине ал хума тӑнӑ. Хӑйне айӑпланипе çеç мар, чире, телейсӗр юратӑва, выçлӑха пула та вӑл çапла хӑтланнӑ.

Çеçпӗл Мишши пурнӑçӗ 1922 çулхи июнӗн 15-мӗшӗнче вӑхӑтсӑр татӑлнӑ. Çапла вӗçленнӗ юратнӑ поэтӑмӑрӑн кун-çулӗ.

***З. ГРИГОРЬЕВА,***
***вӗрентекен.***

Çӗмӗрле районӗ,
Юманай.

# Йывӑрлӑха пайлакан çын – телейлӗ

Икӗ чирлӗ, пачах та утайман Петьӑпа Мишӑна пӗр палатӑна хучӗç. Инкек пулса иртиччен Миша саккӑрмӗш класра вӗреннӗ. Ашшӗпе иккӗшӗ юнашар ялти кӳлле машинӑпа пулла кайма тухнӑ чух аварие лекеççӗ. Çамрӑк ача вӑйлӑ аманать. Петьӑн çемйине те çак инкек пырса тивнӗ иккен. Миша хыççӑн тепӗр темиçе кунтанах ӑна та çак палатӑна илсе килчӗç. Мишӑна чӳрече патӗнчи кравать çине, Петьӑна юнашар вырттарчӗç.

Тем çинчен те калаçрӗç ачасем. Юлташланчӗç те.

– Кӑнтӑрлахи апат хыççӑн, Миша, кӑшт та пулин ларас пулать, – пӗлтерчӗ тухтӑр сывлӑхӗ хавшанӑ арçын ачана.

Кашни кун Миша кӑнтӑрлахи апат хыççӑн пӗр сехет чӳречерен пӑхса тавралла мӗн пулса иртни çинчен юлташне каласа ларчӗ.

– Пирӗн чӳречерен пӗчӗк кӳлӗ курӑнать, унта акӑшсем ишеççӗ.. Ай!.. Ачасем хутран кимӗсем туса шыва яраççӗ, – тесе пӗтӗмпех пӗлтерчӗ юлташне. Вӑхӑт иртсен Петя кашни кун апат хыççӑнхи вӑхӑта кӗтрӗ, çак пӗр сехетшӗн пурӑнчӗ те пуль.

Кунсем, эрне, уйӑх иртрӗ. Ачан сывлӑхӗ начарланса та начарланса пычӗ. Арçын ачана урӑх сыватмӑша куçарнине пӗлтерчӗç. Петя питӗ тунсӑхларӗ, урамра мӗн пулса иртнине тек ӑна никам та каласа паракан пулмарӗ. Вара арçын ача хӑйне чӳрече çумӗнчи вырӑн çине куçарма ыйтрӗ. Хирӗçлемерӗç – куçарчӗç. Интересленнипе Петя ыратнине пӑхмасӑр чӳречерен кармашса тавралӑха тинкерчӗ. Анчах унта вӑл пӗр çӳллӗ стенасӑр пуçне нимӗн те курмарӗ. Арçын ача питӗ тӗлӗнчӗ, тӳрех медсестрана чӗнчӗ.

– Вӑл санӑн кӑмӑлна çӗклентересшӗн, хавхалантарасшӑн пулнӑ пуль, – терӗ медсестра хӑй те тӗлӗнсе.

«Юнашар йывӑрлӑхсене çурмалла пайлакан пулсан телейлӗ çын эсӗ», – теççӗ. Çын телей çути ялкӑшнине курсан ӑшри туйӑм хӑпартланса, хастарланса каять. Мӗн тери пуян пулсан та телее укçа парса илейместӗн. Миша та Петьӑн куçӗ сенче телей курса çӗкленчӗк кӑмӑлпа пурӑннӑ пуль. Туссем иккӗшӗ те сывалса тухсан пӗр-пӗринпе тӗл пулса чун каниччен калаçасса шанчӗç.

***Кристина БАЙБАТОРОВА.***

# Тăван ялăм Тукай Мишер



**Савнă тăван ен… Мĕнле асамлăн, пылаккăн илтĕнеççĕ-çке çак сăмахсем. Уйрăмах кунта çуралса ӳснисемшĕн çапла вăл.**
**Тăван ялăм Тукай Мишер (Комсомольски районĕ) питĕ илемлĕ вырăнта Кăнтăрла (вырăсла Кондурла) юханшывĕ хĕрринче вырнаçнă. Пирĕн яла вырăсла Токаево теççĕ. Ара, ячĕ те питĕ илемлĕ-çке. Ватă çынсем каланă тăрăх Тукай Мишер ялне Тукай ятлă çын никĕсленĕ. Мĕнле майпа-ши? Ăçтан тата хăçан килсе тухнă-ха вăл çак вырăна? Ăсчахсем каланă тăрăх Тукай Мишер ялĕ вунçиччĕмĕш ĕмĕрте никĕсленнĕ.**

1236 çулта Атăлçи пăлхар çĕрĕ çине тутар-монгол çарĕ çитсе кĕнĕ. Вăйсем пĕр пек пулман пирки хĕрӳ çапăçура нумай паттăр пуçне хунă. Тутар-монголсен çарĕ патша çарĕсене çапса аркатнă. Хăйсене хирĕç тăнă çынсен ялĕсене вут тĕртсе çунтарма, ялти ватта-вĕтте пĕр шелсĕр вĕлерме пуçланă. Ялсенче пурăнакансем кил-çурта пăрахса Атăл шывĕн сылтăм çыранĕнчи чăтлăхлă вăрмансене васканă.

Ватă çынсем каланă тăрăх Чулхула кĕпĕрнинчен Кăнтăрла юханшывĕ хĕррине виçĕ çемье куçса килнĕ. Вăрман касса пурăнмалли çуртсем хăпартнă. Пĕчĕк ял пулса тăнă. Чи ватти Тукай ятлă пулнă. Çакăнтан пулса кайнă та ял ячĕ. Анчах мĕншĕн «Мишер-ши»? Мĕншĕн тесен пирĕн ялта тутар мишерсем пурăнаççĕ.

Тукай Мишер – район центрĕнчен çичĕ çухрăмра вырнаçнă пысăк тутар ялĕ. Пирĕн асаттесемпе асаннесен аслашшĕсемпе асламăшĕсем ку тăрăхра хăçан пурăнма пуçланине çирĕплетсе калама йывăр. Çапах та ялăн историйĕ 300 çултан пĕрре те кая мар. Çакă тĕрлĕ архив документĕнче аван палăрать. Тĕслĕхрен, акă 1780 çулта йывăç мечет пулнă. Тем сăлтава пула юрăхсăра тухсан çав вырăнтах 1901 çулта тепĕр йывăç мечет туса лартнă. Хальхи вăхăтра пирĕн ялта кирпĕчрен хăпартнă çĕнĕ мечет. Унта ваттисем кĕлтума çӳреççĕ. Ял хĕрринче Пысăк кӳлĕ текен юханшыв пур. Çуллахи шăрăх вăхăтсенче ача-пăча кунĕпе унта шыва кĕрет. Ачасем хĕлле те Пысăк кӳлĕ патĕнчен татăлмаççĕ – йĕлтĕрпе, çунашкапа ярăнаççĕ.

Тукай Мишер ялĕнчи пĕрремĕш шкул 1918 çулта уçăлнă. Ун чухне кунта çитмĕл ача пĕлӳ илнĕ. Кашни çул ачасен йышĕ ӳссе пырать. Кăçал пирĕн шкулта 300 ача вĕренет. Эпир шкулта вырăс, чăваш, тутар тата акăлчан чĕлхисене вĕренетпĕр. Чăвашла калаçма пире Альмира Небиулловна вĕрентет. Тукай Мишертен инçех мар Чурачăк ялĕ вырнаçнă. Кӳршĕ ялсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнаççĕ.

Манăн шухăшпа ялăн пуласлăхĕ пур. Паянхи кун Тукай Мишер ялĕ çĕнелсе те çĕнелсе пырать. Кил хуçалăхсен шучĕ те 498-тан иртрĕ. Пурĕ 1815 çын пурăнать. Çамрăксем те çемье çавăрса ялтах тĕпленеççĕ. Кунта пурăнма пур услови те çителĕклĕ. Урамсенче асфальт çул. Фельдшерпа акушер пункчĕ ĕçлет. Ялта пурĕ 9 лавкка. Вăй питти арçынсемпе хĕрарăмсенчен нумайăшĕ хамăр ялтах ĕçлет. Хула çыннисем те ялалла туртăнаççĕ. Кунта пурнăç вĕресе тăрать. Апла пулсан Тукай Мишер ялĕн малашлăхĕнче иккĕленӳ çук.

***Гузель ЗАРИФЗЯНОВА.***

Комсомольски районĕ,
Тукай Мишер шкулĕ.

# Кивьял Нурăс ан ватăлтăрччĕ чунĕпе

**Тăватçĕр çул каялла Хирлеп шывĕ Кивьялпа Услапа юханшывĕсенчен аякра юхса иртнĕ. Каярахпа хăйĕн çулне çулсерен улăштарса пынă, Кивьялпа Услапа ялĕсен çумĕпе юхма пуçланă.**



Ял мĕнле никĕсленни çинчен Никандр Кузьмич Кузьмин (1867 çулта Вăрнар районĕнчи Кивьялта çуралнă) çапла каласа панă: «1681 çултан Ватим ятлă ачаран çак истори пуçланать. Ĕлĕк-авал ку тăрăхра вăрманлă, шурлăхлă вырăн пулнă. Кивьялтан 4-5 çухрăмра Нурăс ялĕ (халĕ Калинино) вырнаçнă. Кунта инçетрен куçса килнĕ вырăс халăхĕ пурăннă.

Çав çултах Федор Федоров (ашшĕ ячĕ паллă мар) Хирлеп юханшывĕ çине арман лартать. Çывăхри уя пăрçа акать. Пĕррехинче вăл пăрça анинче 3-4 çулхи ачана асăрхать. Арçын ăна армана илсе каять. Ача хăйĕн ятне çеç пĕлнĕ иккен. Унăн ашшĕпе амăшĕ вăхăт иртсен те тупăнман. Ватим ятлăскере арман хуçи хăех çитĕнтерет.

Ватим 17-18 çула çитсен арманта ĕçлеме пуçланă. 22-23 çул тултарсан вара авланнă. Хирлеп хĕрринче, уçланкăра (хальхи Кудрявцевсен вырăнне) пӳрт лартнă. Çапла вара ку таврара ялсем пуçланса кайнă. Кивьял ыттисенчен  маларах никĕсленнĕрен ăна Кивьял (Кивьялы) тенĕ.

Ватимăн çемйи пысăк пулнă. Анчах ялтисем унăн Антон ятлă ывăлне çеç пĕлнĕ. Антав тесе чĕннĕ ăна вĕсем. Антав хăйĕн ашшĕ вырăннех пурăнма юлнă. Ялта паллă çын пулса тăнă».

Иван Иванович Иванов каласа панинчен вара çакă паллă. Çĕр çул каялла Кивьял Нурăс пушарта тĕпĕ-йĕрĕпе çунса кайнă. Апла пулин те халăх пĕр-пĕрне пулăшса 6-7 çултан каллех çурт-йĕр çавăрнă. Тепĕр вупилĕк çултан Кивьял Нурăс иккĕмĕш хут çунса каять. Çакăн хыççăн çынсем ку вырăна усал çавăрса илнĕ тесе çуррине яхăн Услапа е Хăмăш ялĕсене куçса кайнă. Çапла Кивьялта нимĕнрен те хăраман çынсем çеç юлнă, пушар хыççăн та çурт-йĕре çĕнĕрен çĕкленĕ.

Архив докуменчĕсенче Кивьял пирки пĕрремĕш хут 1719 çулта асăннă. Иккĕмĕш Нурăс тесе палăртнă.

Аслă Кивьял тенĕ халăхра çак яла. Ял çыннисем Нурăсра ашкакай сутнă, хăна çурчĕ тытнă: пĕрремĕш хутра – аш-пăш лавкки, иккĕмĕшĕнче – хăна çурчĕ. Паянхи кун та çав çурт Нурăс ялĕ варринче ларать.

Таврари ялсемпе танлаштарсан Нурăс чи пĕчĕкки шутланать. Ялăн пуласлăхĕ пирки калама темшĕн иккĕленӳллĕ пек. Кунта ытларах ватăсем пурăнаççĕ, çамрăксем хулара. Ахальтен Кивьял тесе каламан пуль ĕнтĕ пирĕн яла. Ял ячĕпе Кивьял пулсан та чунĕпе, вăй-хăвачĕпе çеç ан кивелтĕрччĕ. Аталанса, илемленсе пытăр.

***Александр СЕМЕНОВ.***

Вăрнар районĕ,
Кивьял Нурăс.

Тантăш
47 №, 2014, ноябрь, 20



## Савăнăçлă Рада

Рада Никитина хăйне ялан савăнăçлă туять. Тепĕр тесен, çакна хĕр ачан ячĕ те çирĕплетет. Радăн илемлĕ йăл куллине курсан такамăн та кăмăлĕ çĕкленĕ.

Хĕр ача вăхăта хаваслă ирттерме пĕлет. Çуллахи каникулта аппăшĕпе Маринăпа тата пиччĕшĕпе Анатолийпе кунсеренех пулла çÿренĕ вăл. Шыв хĕрринче хăйне евĕр кăсăклăх курни илĕртнĕ вĕсене. Çак ĕçе пурнăçлама пĕрремĕш хут епле кайнине те ас тăвать:



– Ирхине атте Шупашкартан вăлта туянса килнĕччĕ. Каçхине вара эпир пулла кайрăмăр. Чи пысăккине тытма ĕмĕтленеттĕм те... Тытрăм. Анчах ăна Тигр кушакăм вăрларĕ. Малтан пĕчĕк пĕве хĕрне çеç çÿреттĕмĕр, унта карас пулă нумайччĕ. Халĕ пысăккинче тĕрлĕ шултри те çакланать.

Кĕрхи сивĕре çуллахи ăшă кунсем самаях аса килеççĕ çав.

– Манăн чи юратнă вăхăт та – çулла. Ун чухне выляма лайăхчĕ, аннепе шыва кĕме çÿреттĕмĕр, – кăмăллăн анаслать хĕр ача.

Рада ÿкерме юратать. Пĕррехинче мультфильмра пĕр илемлĕ чĕрчуна асăрханă вăл. Ку пони пулнă иккен. Хитрескере хут çинче сăнлас туртăм çуралнă вара. Ÿкерчĕкĕсем килте йышлансах кайнă, вĕсене хĕрача асăнмалăх упрать.

## «Ялти çула юсаса çĕнетĕттĕм...»

– Эх, эпĕ паллă çын пулас тăк... Ялти çула юсаса çĕнетĕттĕм, – шухăшлăн калаçать виççĕмĕш класри Стасик Степанов.



Асăмçырмине пĕчĕк çеç Юпшик ялĕнчен çÿрекенскере тăван тăрăх шăпи хытах пăшăрхантарать. Çавăнпа вăл лайăх вĕренсе, спортра çитĕнÿ хыççăн çитĕнÿ туса хăйĕн тĕллевĕ патне çитме ĕмĕтленет. Чăнах та, унăн дневникĕнче «5» паллă çеç курма пулать.

Стасикĕн камран тĕслĕх илмелли те пур çав. Аппăшĕпе пиччĕшĕ ăна лайăх çын пулма вĕрентеççĕ. Иккĕшĕ те институтра вĕренеççĕ: Сергей пĕрремĕш курсра, Кристина вара кĕçех алла диплом илĕ.

Пĕр ĕçрен те хăраман арçын ача выльăхсем патне те савăнсах тухать, вĕсемпе пуплеме кăмăллать, апат панă чухне хуçалăхри тусĕсене çурăмĕнчен лăпкаса та илет. Ырă чунлăскере пурнăçра ăнса çеç пытăрччĕ.

## «Вĕренес те вĕренес килет»

Пластилинран тĕрлĕ кĕлетке ăсталама юратакан Марина Семенова çак ĕçе аппăшĕнчен Настьăран вĕреннĕ. Аслисем мĕн тунине яланах евĕрлес килнĕ унăн.




Марина ташлама та юратать. Чун çапла ыйтсан мĕншĕн тăпăртаттарса илес мар?

– Пирĕн ноутбукра хитре юрăсем пур. Çавсене янăраттарнă май эпĕ залра ташлатăп, аттепе анне ман çине пăхса савăнаççĕ. Хăнасем пуçтарăнсан мана тăтăшах сăвă калаттараççĕ. Эпĕ вара нумайăшне асра тытатăп, пăхмасăр каласа пама юрататăп.

Чун вĕçевне ирĕке яма аван-çке. Çавăнпа Маринăн сочиненийĕсем содержанийĕпе те пуян, сăнарлă. Ку тĕлĕшпе ăна нумай вулани те пулăшать-ха. Юмахсем пуринчен ытла илĕртеççĕ. Килте кăшман кăларнă е çум çумланă чухне яланах «Çарăк» юмахха аса илет вăл. Темĕнле йывăр пулсан та туртса кăлармаллах-çке.

– Пĕрремĕш класра питĕ кăсăклăччĕ, çав вăхăта усăллă ирттертĕмĕр тесе шухăшлатăп. Нумай çĕннине вĕрентĕмĕр. Çĕнĕ предложенисем шухăшласа кăларма мана уйрăмах килĕшет. Иккĕмĕш класа та аван пуçларăмăр. Пĕлме кăсăкли татах нумай-ха. Çавăнпа вĕренес те вĕренес килет, – пĕлтерчĕ Марина.

## Пуринпе те тараван

Тăваттăмĕш класри Кирилл Владимиров лайăх вĕренет çеç мар, чупассипе те маттур – кĕçĕн классене илес пулсан ăна çитекен çук. Çавăнпа арçын ача районти ăмăртусене те час-часах тухать, Вăрнарта та, Калининăра, Кÿкеçре те пулнă. Владимир Николаевич Петров физкультура вĕрентекенĕ ачан тăрăшулăхне тата пултарулăхне кура ăна спортпа тата ытларах туслаштарма тăрăшать çав. Кашни тăхтавра Кирилл урама чупма тухать.



Йăмăкĕ Милана пилĕк çулта çеç-ха. Арçын ача ăна нихăçан та тимлĕхсĕр хăвармасть.

– Миланăпа нумайрах калаçма тăрăшатăп, вăл та тĕрĕсрех пуплеме хăнăхĕ вара. Мĕн тума юраманнине те ăнлантаратăп, ырă ĕçе вĕрентетĕп. Йăмăкăма яланах хÿтĕлĕп эпĕ.

Кирилл асламăшне пулăшма кăмăллать, ялти ватăсемпе те тараван. Кинемейсем хальхи техникăна ăнлансах каймаççĕ, телефонпа е телевизорпа мĕн те пулин пулсан арçын ачаран пулăшу ыйтаççĕ. Кирилл вара çынна ырă ĕçпе савăнтарма яланах хавас.

*Лариса ПЕТРОВА.*

Вăрнар районĕ,
Асăмçырми шкулĕ.

**ШУХĂШ**

# Хăш чухне юлташ та тăванран çывăхрах

Пĕр хĕллехи ир йăмăкпа урамри çÿп-çап купи çинче чанапа ула кураксем чакаланнине чÿречерен сăнаса лартăмăр.

Сасартăк çак «пухăва» тепĕр кайăк вăйсăррăн вĕçсе пырса ларчĕ... Тĕлĕнмелле, хура курак вĕт ку! Хĕл кунĕнче вăл мĕн туса çÿрет-ха? Сывлăхĕ хавшакрах пулнипе, ури уксахланипе ыттисемпе ăшă тăрăха вĕçсе каяйман пуль çав.

Вăхăт та самай иртрĕ, çак курак кашни кун килет пирĕн умри çÿп-çап купи патне. Эпир ăна çăкăр тĕпренчĕкĕ, апат юлашки тухса паркаларăмăр. Анчах та хăй çиейместчĕ те пуль, ыттисем вара йăлт çисе яратчĕç. Кунсем иртнĕçемĕн куракăн вăйĕ чакса пыни курăнать. Вăл яланах кĕтесре ларать, пĕччен. Ăнсăртран куратпăр: ула кураксем ăна хушăран таккаса илеççĕ, тĕккелени те пулкаларĕ. Мĕнпе пулăшмалла-ха ăна? Кайăк кунран-кун вăйсăрланса пырать, çÿп-çап купи çывăхне пыма та хăракан пулчĕ ĕнтĕ.

Пĕр ирхине вăраннă-вăранманах чÿрече патне пытăм. Пирĕн курак выртнине курса урамалла вирхĕнтĕм. Йăмăкпа иксĕмĕр кайăка пÿрте илсе кĕртсе ăшăтрăмăр, апат çитертĕмĕр. Тинех тăна кĕнĕ пек туйăнчĕ.

Пĕр ик эрне пирĕн патра пурăнсан курак самаях вăйланчĕ, харсăрланчĕ. Эпир ăна каялла урама кăлартăмăр. Алла вĕреннĕскер çынран хăрами те пулчĕ, кашни кун килти чăхсемпе вăхăт ирттерчĕ. Унччен малтан эпир çавăн пекех чакака усранăччĕ. Вăл халь хăйне кил-тавралăшĕнче хуçа пекех тыткалать, çĕр каçма пÿрт умĕнчи чие йывăççи çине кашни кунах килет. Тĕлĕнмелле! Çак икĕ кайăк туслашрĕç. Чакак ăсталла вĕçет, курак та унтан юлмасть. Икĕ туса йĕпетнĕ çăкăр параттăмăр. Апатланатчĕç те иккĕшĕ тÿпенелле вĕçсе хăпаратчĕç.

Çапла майĕпен хĕл те иртрĕ. Кураксем те таврăнчĕç. Кашни хăйĕн мăшăрĕпе йăва çавăрчĕ. Каç еннелле сулăнсан кашни йăвара икшерĕн пăшăл-пăшăл калаçаççĕ тейĕн. Анчах та пирĕн курак хăйне валли мăшăр тупаймарĕ. Вĕсем чакакпа пĕрлех вĕçсе çÿрерĕç. Пăхатăн, яланах çума-çумăн хурăн туратти çинче лараççĕ. Тус-юлташ чылай чухне тăвантан та çывăхрах çав. Курак хăйĕн сывăх юлташне чакакра курчĕ пуль.

*Кристина БАЙБАТОРОВА.*

Çĕмĕрле районĕ.

# Хăнара – "Тетте" журнал

*Николай ИШЕНТЕЙ*

## Кашнин хăйĕн меслечĕ

Кĕркунне – тĕлĕнмелле тапхăр. Йĕре-кула çанталăк тĕкĕнмесĕр макăрать, хĕвел пăхсан савăнать.

Пĕр ирхине шкула кайма тухрăм. Çумăр хыççăн утма йывăр. Утăм тăватăн – ура шуçнăран çурри каялла каять. Пăхатăп: кăвакал ушкăнĕ пырать. Чи малта сенкер çунатли таплаттарать, пуçне ун-кун вылятать. Кĕтӳ пуçĕ пулас. Хыçалта – чăпарри. Амăшĕ ĕнтĕ. Чĕпписем варринче йăртлаттараççĕ. Енчен еннелле тайкаланса.

Кăвакалсем таçта васкаççĕ. Те утаççĕ, те чупаççĕ, те ярăнаççĕ лапра çинче – пĕлме çук. Ăмăртăва тухнă тейĕн. Йăлтти-ялтти сикрĕм те хăвалаcа çитрĕм хайхисене. Тайкаланчăксем ăçтан малта пулччăр! Анчах мĕн ку? Пысăк кӳлленчĕк çула пӳлчĕ.

Кăвакалсене мĕн – савăнсах ишеççĕ шывра, туслăн пакăлтатаççĕ. «Нарт! Нарт! Эпир кайри мар!», – тет пулас чăпарри хăпартланса. «Лар! Лар! Киле кайса лар!», – пакăлтатать сенкер çунатли. Хыçа юлнăшăн мăшкăлласшăн-ши?

Манăн киле мар-ха, шкула каймалла. Юрать атăпа. Кӳлленчĕкелле пĕр утăм турăм. Ай! кĕçех урана йĕпететтĕм. Ирĕксĕрех çавра çулпа çаврăнма тивет. Кăвакалсем кӳлленчĕк урлах ишрĕç. Шыв çийĕн йĕр хăварса. Пĕчĕк кимĕсем тейĕн. Унччен те пулмарĕ, малта пыраканни нарт! терĕ те сывлăша çĕкленчĕ. Ыттисем – ун хыççăн. Кĕçех кайăксем куçран çухалчĕç.



*Александр ПЛЕХАНОВ*

Тепĕр ăстрăм çумăр тăканиччен аранах шкула çитсе ĕлкĕртĕм. «Кашнин хăйĕн меслечĕ. Пĕри – çунатпа, тепри – ăспа. Манăн вĕренӳре малта пулмалла», – çак шухăшпа кĕрсе лартăм класа.




● ПИРĔН ПУЛТАРУЛĂХ

## Пĕчĕк йăмăк



*Манăн пĕчĕк йăмăк пур,*
*Пуринчен те вăл маттур.*
*Теттисемпе калаçать,*
*Хăй чĕлхипе юмахлать:*
*– Пуканеçĕм, ан макраш,*
*Пустуях эс ан çухраш!*
*Пул эс лăпкă та йăваш,*
*Ыттисемшĕн тус-юлташ!*

*Алеша ОСИПОВ, 2 класс.*

Муркаш районĕ,
Нискасси шкулĕ.

*Александр ПЛЕХАНОВ*

● "ПИРĔН ТУСЛĂ КЛАСС" + "ПИРĔН ХАВАСЛĂ УШКĂН" КОНКУРС МАЛАЛЛА ПЫРАТЬ



*Хĕрлĕ Чутай районĕ, Çĕнĕ Атикасси ача сачĕ.*



*Шăмăршă районĕ, Виçпӳрт Шăмăршă пуçламăш шкул ача сачĕ.*

**Эсир «Тетте» журнал çырăнман пулсан – васкăр. Çырăнтару кĕçех вĕçленет. Ачăрсем, мăнукăрсем юратнă журналсăр ан юлччăр!**

Тантăш
47 №, 2014, ноябрь, 20


# ĂША САЛАМСЕМ






***Çывăх çынсене, юлташсене е юратнă вĕрентекенсене хаваслă кăмăл парнелес тесен нумай та кирлĕ мар – çуралнă кунпа е ытти уяв ячĕпе «Тантăша» ăшă салам вĕçтермелле çеç. Хаçата алла тытсанах хăйне саламланине курма кашнинех мĕн тери кăмăллă! Ырă сунса шăрçаланă йĕркесене телефонпа 89051975911, 89876741833 номерсем çине е редакцие çырупа ăсатăр.***

***Электрон адреспа (tantas@list.ru) та яма пултаратăр.***

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Чурпай ялĕнче пурăнакан **Дима Ильина** 14 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр.

Хаклă Дима, эс пуртан
Пурнăç савнăçлă ялан.
Калаçатăн кăмăлтан
Е лăпкатăн: «Ан кулян!»
Саламлатпăр халь йышпа
Сан çуралнă кунупа!

***Пĕрле вĕренекенсем.***
Хĕрлĕ Чутай районĕ,
Çĕнĕ Атикасси шкулĕ.

✦ ✦ ✦

Çитес кунсенче «Тантăш» хаçат



тусĕн, шкултан ылтăн медальпе вĕренсе тухнă, халĕ И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче «5»-пе ĕлкĕрсе пыракан 5-мĕш курс студенткин, алă вăйне виçессипе ăмăртакан спортсменкăн, пултаруллă фотокорреспондентăн **Олеся Владимировна Игнатьевăн** черетлĕ çуралнă кунĕ пулать. Тĕлĕнетпĕр, савăнатпăр, мухтанатпăр. Çирĕп сывлăх, кунсерен ăнăçу, иксĕлми вăй-хал, тулли телей сунатпăр сана, Олеся! Ĕмĕтÿсем пурнăçа кĕрсе пычăр, пурнăçу юмахри пек ăнăçуллă пултăр, хăвна ăнланакан, чунтан хисеплекен, хаклакан çынна тĕл пулма сунатпăр!

***Сана ачаран пĕлекен Нина МИХАЙЛОВĂПА Надя ИЛЛАРИОНОВА.***

✦ ✦ ✦

Комсомольски районĕнчи Хырай Ĕнел ялĕнче пурăнакан **Инесса Сергеевна Зайцевăна** çуралнă кунĕ ячĕпе саламлатăп. Юратнă хĕрĕме çак сăвва парнелетĕп.

Инесса ятлă хĕр ÿсет
Хырай Ĕнел ялĕнче.
Кулленех шкула çÿрет,
Сумка унăн аллинче.
Хĕвел евĕр йăл кулса
Сывлăх сунать çынсене.
Асламăшĕ юратса
Савса пăхать мăнукне.
Шăп çеç ларать урокра
Нумай пĕлме тăрăшса.
Вĕренет тытма асра
Сăмаха шăрçаласа.
Вăл пĕлет-çке: пурнăçра,
Ах, ăс-тăн ялан шутра.
Тăрăшать халь вĕренме
Йывăрлăха çĕнтерме.
Пур çĕре те ĕлкĕрет,
Кăмăла ялан çĕклет.
Юрлама та юратать,
Ват çынна сума сăвать.

***Светлана НИКИТИНА.***

✦ ✦ ✦

Элĕкри тĕп больницăра невропатолог пулса чунне парса ĕçлекен **Ираида Львовна Михайлова** çитес шăматкун 50 çулхи юбилейне паллă тăвать. Эпир, больницăна çÿрекенсем, çавăн пек пултаруллă тухтăр



пирĕн сывлăха тĕресленишĕн, вăхăтра пулăшу панишĕн, вăй-халне шеллеменшĕн ăна тав тăватпăр. Хурçă пек çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хал, ĕçре те кунсерен ÿсĕмсем, тулли телей сунатпăр. Çĕр çинчи мĕн пур ырлăх унăн пурнăçĕнче пултăр. Вăл пире сăпайлăхĕпе, ĕçченлĕхĕпе, ырă кăмăлĕпе тĕлĕнтерет, савăнтарать, эмелсĕрех сиплет. Вăй-халу çиттĕр нумай-нумай çул ĕçлеме.

***Пациентсем.***

ПĔТĔМЛЕТŸ

# Чи лайăх ача-пăча библиотекарĕсем тупăшрĕç

Нумаях пулмасть Чăваш наци библиотекинче регионсем хушшинчи «Атăлçи федераллă округĕн чи лайăх ача-пăча библиотекарĕ» конкурс иртрĕ. Ăна йĕркелекенĕ – Шупашкарти Ачасемпе çамрăксен библиотекин директорĕ Т.Р.Григорьева. Жюри председателĕ – Культура министрĕн заместителĕ Т.В.Казакова. Çавăн пекех мероприятие ача-пăча çыравçи Дмитрий Суслин, Чăваш наци библиотекин директорĕ С.М.Старикова, Маяковский ячĕллĕ вулавăш ертÿçи О.Ю.Гольман хутшăнчĕç.

Конкурса Атăлçи федераллă округĕн 14 регионĕнчен 15 библиотекарь хутшăнма кăмăл тунă. Пирĕн республика чысне Канаш хулинчи Ача-пăча пĕрлешĕвĕн ертÿçи Е.В. Васильева хÿтĕлерĕ. Елена Владимировна – республикăри чи лайăх библиотекарь ята çĕнсе илнĕ вулавăш ĕçченĕ. Вăл «Интереслĕ юмаха кăмăллакансем» волонтер юхăмне епле йĕркелени, унăн ĕçĕ-хĕлĕ çинчен каласа пачĕ. Çак юхăма хутшăнакансем сусăр ачасем патне çÿресе вĕсене юмах лартса панă тата, паллах, кĕнекесемпе савăнтарнă.

Тĕпрен илсен, библиотекарĕн тĕллевĕ – ачасене вулавăша çÿреме илĕртесси. Кашнин проекчĕ хăйне евĕр кăсăклă. Пушкăрт Республикин тĕп хулинчен Ĕпхÿрен килнĕ Э.Р.Фаттахова ачасене мультфильмсем илĕртнине палăртрĕ. Çавăнпа вăл вулавăшсенче мультстуди уçма сĕнет. Мультфильмсене курма çеç мар, ăсталама та кăсăклă иккен. Чи малтанах, вуласа тухнă хайлава лайăх ăнланмалла. Çак ĕçе пурнăçлама çăмăлах мар, анчах çав тери йывăр та тееймĕн. Ĕпхÿри «Апельсин» мультстуди, тĕслĕхрен, Сергей Козлов юмахĕ тăрăх Чĕрĕппе Упа çури çинчен мультфильм хатĕрленĕ.

Маттур библиотекарьсем чылай проектпа паллаштарчĕç. Çĕнтерÿçĕсене палăртас явапллă тапхăра вара тепĕр куна хăварчĕç.

***Лариса ПЕТРОВА.***

# Çĕнтерÿçĕсене чыслани

Ача-пăчапа çамрăксен библиотекинче «Атăлçи федераллă округĕн чи лайăх ача-пăча библиотекарĕ» регионсен хушшинче иртекен конкурсăн юлашки тапхăрĕнче мала тухнисене чысларĕç. Çĕнтерÿçĕсене Чăваш Республикин культура министрĕ В.П.Ефимов парнесем пачĕ.

Конкурс «Раççей Культури» федераллă программăпа килĕшÿллĕн, РФ культура министерстви тата кĕнеке кăларакансен фончĕ пулăшнипе пурнăçланнă. Конкурссăсем хăйсен проекчĕсене «Ача-пăчапа çамрăксене тивĕçтерекен чи лайăх библиотека проекчĕ» тата «Ача-пăча вулавне ÿстермелли чи лайăх проект» номинацисенче хÿтĕлерĕç.

Тÿресем пĕтĕмлетÿ тунă хыççăн çĕнтерÿçĕсене палăртрĕç. Пĕрремĕш номинацире Киров облаçĕн ача-пăчапа çамрăксен А.С.Грин ячĕллĕ библиотекин, литература искусствин уйрăмĕн заведующийĕ Екатерина Михайловна Цивилева çĕнтерчĕ.

Иккĕмĕш номинацире – Пермьри Л.И.Кузьмина ячĕллĕ ача-пăча библиотекин заведующийĕ Елена Леонтьевна Герасимова.

Хавхалантару парнине тивĕçекенсем те пулчĕç. Вĕсен йышĕнче пирĕн ентеш, «Ачасемпе çамрăксене библиотека сăйлавĕпе тивĕçтерессин пахалăхне ÿстерес тĕлĕшпе чи лайăх проект» номинацире мала тухнă Елена Владимировна Васильева, Канашри ача-пăча библиотекарĕ.

Вулавăш ĕçченĕсене парнесемпе чысланă хыççăн кĕнекепе туслă шкул ачисен ĕçĕсене хакларĕç. Вĕсем хăйсен ертÿçисемпе регионсен хушшинчи «Сывлăх культури – çамрăксен суйлавĕ» наукăпа практика конференцине хутшăннă. Чи маттуррисене дипломпа парне парса хавхалантарчĕç. Пурĕ вунă çĕнтерÿçĕ пулчĕ. Вĕсенчен пĕри Чĕмпĕрти ача-пăча библиотекин çамрăк вулавçи Диана Абульханова. Физикăпа математика лицейĕнче виççĕмĕш класра вĕренекен хĕрача çак пысăк конкурсра çĕнтернĕшĕн питех те хĕпĕртенине пытармарĕ. Вăл хăйĕн ертÿçипе Мария Алексеевна Козловăпа «Сывă ÿтре чипер ăс-тăн пулать!» темăпа презентаци хатĕрленĕ.

– Ку конкурсра малтисен йышне кĕни тата Чăваш Республикин тĕп хулине, Шупашкара, килсе кайни нихăçан та асăмран тухмĕ, – кăмăллăн калаçрĕ Диана. – Мана кунта питĕ килĕшрĕ. Тĕрлĕ конкурса хутшăнас туртăм татах вăйланчĕ. Парнесем пани вара пушшех кăмăла кайрĕ, – йăл кулать хĕрача.

ЧР культура министрĕ конкурса хутшăнакансене, аякран килнĕ хăнасене, ертÿçĕсене, мероприятие йĕркелекенсене тав турĕ. Çĕнтерÿçĕсене ăшшăн саламларĕ, малашне те пысăк çитĕнÿсем тума сунчĕ.

– Хальхи вăхăтра библиотекăсем пурнăçра чăнах та пысăк пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнаççĕ. Библиотекарьсем тăвакан ĕç вара чи пархатарлисенчен пĕри, – терĕ Вадим Петрович сăмахне вĕçленĕ май.

***Нина ЦАРЫГИНА.***

Степан МИХАЙЛОВ

# СЎНМИ ЮРАТУ, е ПУХВИРĔН КУЛАС КИЛЕТ

**(3 пайлă, 5 курăнуллă пьеса-юмах)**

**(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 42-46-мĕш номерсенче).**

САХАР. Эпир кунта япăхах пурăнмастпăр. Хăв мĕнле кайса килтĕн?

ПУХВИР. Эпĕ те аванах, хăвăр куратăр. Мĕншĕн кайнă, çавна тупса килнĕ. Сахар, часрах Савтепине антарма пулăш-ха. Вăл ыванса çитнĕ пулмалла, пуçне те çĕклейми пулчĕ.

*Сахар Савтепине антарать. Унтан лашине çавăтса кайса хупать те каялла пырать.*

УКАХВИ. Апла пит ыванса çитрĕр пуль? Хырăмăр та выçрĕ пулĕ?

ПУХВИР. Халĕ киле çитнĕ, выçах вилмĕпĕр.

*Илюкăн ашшĕпе амăшĕ - Старикпе Карчăк кĕреççĕ. Пухвир патне пыраççĕ, пуç таяççĕ.*

СТАРИК. Сывлăх сунатăп сана, Пухвир хуçа!

КАРЧĂК. Ырă кун пултăр сана! Чиперех кайса килтĕн-и?

ПУХВИР. Пит аван кайса килтĕм. Мĕн шырама кайнине тупрăм.

УКАХВИ. Савтепине ăçтан тупса килтĕн? Чике-Сухал патĕнченех-и?

ПУХВИР. Çапла. Тĕнче хĕрринчен! Çичĕ ту хысĕнчен, çичĕ тинĕс леш енчен,Чике-Сухал аллинчен туртса илсе кунта илсе килтĕм.

УКАХВИ. Ырăнах парса ячĕ-и е çапăçура çĕнтертĕн?

ПУХВИР. О-о-о! Виçĕ кун та виçĕ çĕр пĕр канмасăр çапăçрăмăр. Эпир çапăçнă вырăнта çĕр путса анчĕ. Çав путăкран шыв тапса тухрĕ те тинĕс пулса тăчĕ. Çав тинĕс Чике-Сухал юнĕпе хĕрелчĕ...

САХАР. Апла эсĕ, Пухвир хуçа, Чике-Сухала тĕппипех пĕтернĕ...

ПУХВИР. Пĕтертĕм çав! Пĕвне çав Хĕрлĕ тинĕс тĕпне ятăм, пуçне сăрт пек чул айне хурса хăвартăм.

САВТЕПИ (*ĕсĕклесе йĕрсе*). Эх, мухтанчăк!..

ПУХВИР. Чарăн! Санран ыйтмарĕç пуль вĕт?

КАРЧĂК. Эпир пĕр сăмах ыйтасшăнччĕ те...

ПУХВИР. Ыйтăр! Мĕн ыйтмалла?

СТАРИК. Эпир, ăçта та пулин çул çинче пирĕн Илюка курманши? - тесе ыйтасшăнччĕ...

КАРЧĂК. Ара, сана Илюка шырама кайнă терĕç те...

ПУХВИР. Çук. Нимĕнле Илюка та курман эпĕ.

САВТЕПИ. Ах, суять вăл. Ан ĕненĕр ăна!

ПУХВИР. Сахар, Савтепине халех ампара кайса хуп та питĕрсе ил... Асту, никампа та ан калаçтăр. Эсĕ, Укахви, халех кай та туя хатĕрлен. Ыран валли пурте хатĕр пултăр! Чике-Сухала çĕнтерсе Савтепине илсе килнĕ ятпа ыран пĕтĕм халăх тĕлĕнмелле туй тăватăп. Илтрĕн-и?

*Илюк, Каччă тата Мулкачă кĕреççĕ.*



ИЛЮК. Илтрĕмĕр!

*Пухвир Илюка курсан хăранипе кутăн-кутăн чакса Укахвине пырса çапăнать. Иккĕшĕ те йăванса каяççĕ.*

УКАХВИ. Кай! Мĕн пулчĕ сана? Ак, тамаша! Ман çине пырса кĕрет.

*Илюкпа Каччă кулаççĕ.*

ИЛЮК. Сывă-и, ял-йыш?!

КАРЧĂК. Ах, ачам! Ывăлăм! (*Илюка чуптăвать*).

СТАРИК. Илюкăм! Эсĕ те çитрĕн-çке, ачам! (*Ывăлне çупăрлать*).

САВТЕПИ. Ах, Илюкăм!!! Ытла та вăхăтлă çитрĕн-çке эсĕ!

*Савтепипе Илюк ыталанаççĕ.*

САХАР. Сывă-и, тăванăм? Чăнах та питĕ вăхăтлă çитрĕн!

ИЛЮК. Эпĕ нихăçан та кая юлмастăп, яланах вăхăтра çÿретĕп. Çапла-и, Пухвир хуçа? Эсĕ манран ĕмĕрлĕхех хăтăлтăм тесе шутларăн пулас... Акă, эпир кĕтмен çĕртенех хирĕç пултăмăр. Ку телпулу сана пачах килĕшмерĕ пулмалла...

ПУХВИР (*ури çине тăрса сăхсăхса*). Тур çырлахах! Мĕн пулчĕ мана? Тĕлĕкре мар-ши эп? (*Хăйне хыпаласа пăхать*).

ИЛЮК. Ха-ха-ха! "Тĕлĕкре мар-ши эп?" Лайăххах хыпала, тен, чăнах та тĕлĕкÿнте мар-и?

ПУХВИР. Ан кулса тăр, вилнĕ çын! Кай, ман арăм çумĕнчен!

ИЛЮК. Çук! Туйна ыран тăвас терĕн вĕт-ха. Апла сан арăму мар-ха вăл.

СТАРИК. Ах, ывăлăм, ан тавлаш унпа. Атя, киле кайăпăр та тăраничен калаçăпăр.

КАРЧĂК. Эпир Старикпе вăйçăрланса çитрĕмĕр. Тавтапуç çак Сахара. Эс кайнăранпа вăл пире пулăшса тăчĕ.

ИЛЮК. Юрĕ, тăвансем. Атя, Савтепи, пирĕн пата. Унта калаçăпăр.

ПУХВИР. Савтепи, эс ниçта та каймастăн. Эп саншăн Чике-Сухалпа виçĕ кун çапăçнă. Сана çав усалтан хăтарса илсе килтĕм.

САВТЕПИ. Мĕнле намăс мар сана çавăн пек суйса тăма?

ИЛЮК. Ха-ха-ха-ха! .. Илтрĕр-и мĕн калать вăл? Эс ытти курманилтмен çынсен умĕнче суйсан та çак курса ларакан ача-пăчана ниепле те суяймастăн. Пăх-ха, мĕн чухлĕ унта!

ПУХВИР. Унта ман майлисем те пур.

ИЛЮК. Апла пулсан хăйсенчен ыйтатпăр. (*Куракансен еннелле пăхса*). Ачасем, эсир йăлтах куртăр вĕт Савтепине кам хăтарнине? Сирĕн хушăра кам та пулин Пухвир майли пур-и? Вăт, куратăн-и? Сан майли никам та çук. Эсĕ çавăн чухлĕ ачана улталасшăн. Эс Чике-Сухала хăйне курман пулсан, акă, ун сухалне кур! (*Чике-Сухал сухалне кăларса Пухвир çине ывăтать*). Эпĕ ăна сана кирлĕ пулĕ тесе илсе килтĕм.

*Хĕç тытнă Пухвир Илюк еннелле чупса пыма тăрать, анчах ăна Сахар çапса ÿкерет те ĕнсинчен тытса тăрать.*

САХАР. Ăçта пыратăн, ултавçă?! Тăр! Сана пĕтĕм халăхпа суд тăватпăр çакăншăн.

ИЛЮК. Вăл мана пĕрре вĕлернĕ, иккĕмĕш хут вĕлереймест. (*Пухвир умне пырса*). Эсĕ вăт, пĕрре те вилсе курман пулсан – халь вилме лекет санăн. Анчах малтан хăвăнтан ыйтатăп: сан вилес килет-и е кулас килет?

ПУХВИР. Виличчен кулма аванрах пуль маншăн. Эп вилес мар тесе хуть мĕн чухлĕ кулма пултаратăп.

ИЛЮК. Апла пулсан кул! Кушел, Пухвирĕн кулас килет!

*Пухвир сасартăк сиккелеме, пăркаланма пуçлать. Хăй каçса кайса кулать, унтан йăванса каять.*

ИЛЮК. Чарăн, кушел! Сахар, илсе кайса пăрах ăна хăйĕн пÿртне!

*Сахар çурăмĕ çине Пухвире çавăрса хурать те пÿрте илсе каять, унтан каялла пырса тăрать.*

САВТЕПИ. Тавтапуç сана, Илюкăм! Халь пире ирĕккĕн тата телейлĕ пурăнма чăрмантаракан никам та çук ĕнтĕ...

ИЛЮК. Çук, Савтепи. Пухвир пек çын юнĕпе пурăнакан нумайха тĕнчере. Ну, вăхăт çитсен вĕсен те шăпи тулĕ.

КАРЧĂК. Ывăлăм! Савтепи килĕшет пулсан атьăр киле, пирĕн пата. Унта тăварпаçăкăрпа пиллештерĕпĕр. Авалхи йăлапа туй ятне тăвăпăр.

СТАРИК. Пирĕн ĕçмелли-çимелли нимех те çук та çапах йăлине тăвас пулать.

ИЛЮК. Ĕçме-çимешĕн ан хăрăр. Ак кунта ман темиçе туй тума та çитет. Ĕçĕр, çийĕр - нихăçан та пĕтмест.

САХАР. Хаклă юлташăм! Апла пулсан эп те сирĕнтен юлмастăп. Ак çак Укахви тахçанах ман çума çыпçăнать. Авланатăп. Ăна качча илетĕп. Ĕçĕ те пĕттĕр.

УКАХВИ (*Сахара пырса ыталаса*). Ах, чунăм! Сана хăçантанпа юратса пурăнатăп. Тинех килĕштертĕн апла?

ИЛЮК. Питĕ аван. Икĕ туй туса иртеретпĕр! Анчах ман пуринчен хаклă юлташ пĕччен юлать. Ну, ăна валли те хĕр тупатпăр.

*Çак вăхăтра Мулкачă пуç хĕрлĕ çаврăнса илет те питĕ чипер Хĕр пулса тăрать.*

ХĔР. Акă эпĕ! Эпĕ сĕм вăрман патшин хĕрĕ. Мана Чике-Сухал темиçе хут та вăрласа кайма тăнă пирки Мулкачла çавăрчĕç те Чике-Сухал тин мана çухатрĕ.

КАЧЧĂ (*Хĕр патне пырса*). Мĕн тери чиперкке! Эп сана халиччен курман, калаçман пулсан та пĕрре халь курнипех юратрăм. Эс килĕштерен пулсан, эп халех Илюксемпе пĕрле туя ларма хатĕр.

ХĔР. Эп килĕштеретĕп. Анчах эс хăçан та пулин мана çилленĕн те çисе ярăн. Эс Кашкăр вĕт?

КАЧЧĂ. Çук. Ун пек нихăçан та пулмасть. Халь пĕтĕм тăшмана çĕнтерсе пĕтернĕ хыççăн, Мулкачăпа Кашкăр та туслă пурăнма пултараççĕ.

ИЛЮК. Тĕрĕс! Юмахра тем те пулать. Акă виççĕмĕш мăшăр тупăнчĕ. Виçĕ туй пĕрле тăватпăр.

КАРЧĂК. Пирĕн хаклă ачамăрсем! Эпир сире ырă кун-çул, телейлĕ пурнăç сунасшăн.

СТАРИК. Ĕмĕрех пĕр-пĕрне юратса туслă пурăнăр. Çук çынна ан кÿрентерĕр.

ПУХВИР (*чупса тухса*). Эй, тăвансем, юлташсем! Мана та пĕрле илĕр, тархасшăн пĕччен ан хăварăр. Эп сире урăх нихăçан та кÿрентермĕп.

ИЛЮК. Э-э-э! Тăна кĕтĕн-и? Тăван-юлташ тупрăн? Çук! Пире урăх улталаймăн. Эпир сан чеелĕхне вĕренсе çитнĕ.

ПУХВИР. Тархасшăн илĕр пĕрле - эп сире туй тума пĕр пăру тата пĕр-икĕ михĕ çăнăх паратăп.

ИЛЮК. Эх, мĕнле ырă кăмăллă пулса кайрăн эсĕ? Эс пиртен куласшăн пулсассăн, тархасшăн, кул. Кушел, Пухвирĕн кулас килет!

ПУХВИР. Çук, çук! Ман урăх кулас килмест! (*Пÿртнелле тарса кĕме тăрать, анчах тераскă çинче сиккелеме, ахăлтатса кулма пуçлать. Унтан ĕмĕрлĕхех йăванса каять*).

ИЛЮК. Çитĕ сана ахăрма
Ĕçчен халăх хушшинче!
Халĕ пирĕн курмалла
Ырлăх тăван çĕр çинче.

Эпир тÿснĕ пусмăра...
Текех куçа хуплаймăр.
Вăйпа илнĕ ирĕке
Пиртен туртса илеймĕр.

(*Куракансене*).
Пирĕн туя тăвансем
Пурте пĕрле чĕнлăпăр.
Пире ырă сунакан,
Килсем! Хапăл тăватпăр.

Ну, ĕçмелли-çимелли,
Тухăр-ха пирĕн ума!
Çамрăкки те, ватти те
Пурте килĕр туй курма!

(*Апат-çимĕç тата ĕçме-çиме лартса тултарнă сĕтел тухса ларать*).
Ĕçĕр, çийĕр пирĕнпе,
Халĕ эпир - ирĕкре.
Юрлăр, ташлăр, савăнăр!
Анчах пире ан манăр!

*Туй юрри пуçланать. Юрă вĕçленнĕ çĕре ширма умне Юмахçă - Шур Сухал тухса ларать.*

ЮМАХÇĂ - ШУР СУХАЛ.
Ырă халăх тăхтăр-ха,
Мана кăштах итлĕр-ха!
Хам мĕн курни-илтнине
Сире пăртак калам-ха.
Эп те пултăм çав туйра...
Кун пек туй вăл пит сайра!
Çак шап-шурă сухала
Лÿшкерĕм çеç сăрапа.
Эп кĕслепе каларăм...
Туя пысăк чыс турăм.
Ну, юрларĕç савăнса,
Ывăнтарчĕç ташласа.
Ĕçми-çими нумай(йи)пе
Халăх ĕçет майĕпе...
Хăшĕ ĕçет алтăрпа!
Мана хайхи, кĕслеçе -
Тыттараççĕ алапа...
(*Кулать*).
Халь туй халăх(ĕ) савăнса
Кайса пĕтрĕ саланса.
Пирĕн паттăр Илюк та
Часах выртрĕ çывăрма...
Путрĕ тутлă ыйăха.
Каяр пулĕ эпир те...
Çитрĕ пулĕ пире те.
" Сахал" - тесе ан калăр,
"Начар" - тесе ан ятлăр.
Чипер кайса çывăрăр,
Тутлă тĕлĕк çеç курăр.
Юмах килĕшрĕ пулсан
Татах килĕп сыв пулсан.

**Чаршав.**

*Пичете*
***Геннадий КИРИЛЛОВ** хатĕрленĕ.*

## Тарни

– Антон... Антон, – пăшăлтатрĕç лейтенант тутисем. – Асту, вĕсен аллине ан çаклан. Тискер чĕрчунсем вĕсем, çын çиенсем... Çак сехете асăнмалăх ил, – командирăн вăйсăрланнă алли кăкăр умĕнчи кĕсйине тĕрĕслерĕ. – Манăн документсене, Антон, çĕр айне чавса хур... Чĕрĕ юлсан киле, Кубане, пĕлтер...

Полк вĕренекенĕн Антон Губаревăн çак лейтенанта мĕн тери пулăшас килет-çке! Анчах мĕнле? Хамăрăннисем каялла чакаççĕ. Çывăхри яла çитме пилĕк çухрăм каймалла, анчах унта хăрушă, йĕри-таврах нимĕçсем. Траншейăран тухнăранпа икĕ сехет çитрĕ ĕнтĕ, Антон вара аманнăскере çур çухрăмран кăшт ытларах çеç туртса кайрĕ. Тепĕр çавăн чухлĕ кайсанах вăрманта пытанма пулĕччĕ. Анчах...

Ирхине хĕвел сывлăма типĕтрĕ çеç, тыткăна лекнисене сарай умне пĕр рете тăратрĕç те утма хушрĕç. Вĕсене таçта лагере хăваларĕç. Ăçталла – никам та пĕлмерĕ. Антон çумĕнче, унăн хулпуççийĕ çине тĕршĕнсе, çамрăках мар салтак утать.

– Эсĕ тар, каччă. Аллу-уру сывă. Эпир пултараймастпăр, эсĕ вара чуп, – вĕрентрĕ вăл арçын ачана. – Вăрман патне çитер кăна.

Сасартăк самолет кĕрлевĕ илтĕнчĕ.

– Пирĕн! – кăшкăрса ячĕ такам.

Фашист-конвоирсем çул хĕррине ыткăнчĕç. «Сывă пулăр!» – тесе хăварчĕ те Антон кÿршине таçта тарса çухалчĕ...

**И.МАНДРИК**



# Кĕрешмелле!



– Антон, пулчĕ...

Лейтенант юлашки хутчен ассăн сывласа илчĕ.

– Лейтенант юлташ! Взвод командирĕ! – чĕнчĕ Антон.

Хурав паракан пулмарĕ. Арçын ача чĕри пăчăртанчĕ, куçĕсем хытăрах мăчлаттарма тытăнчĕç, çунса тухакан пит çăмарти тăрăх вĕри куççуль юхса анчĕ. Аптăраса ÿкнипе вăл лейтенант кăкăрĕ çине пуçне хурса сасăпа макăрма тытăнчĕ.

Сехет иртрĕ, тепре. Антон халĕ шăппăнрах йĕрет, майĕпен тăна кĕрсе пырать. Сасартăк çурăм хыçĕнче такам йывăррăн утни тата палламан чĕлхепе калаçни илтĕнчĕ.

«Нимĕçсем!» – шухăшласа илчĕ Антон.

Тăнлав тĕлĕнче шаккама пуçларĕ. Мĕн те пулин тумаллах. Лейтенант документсене çăлмалла! Антон çĕкленмесĕрех гимнастеркăн сулахай кĕсйине усрĕ, унтан кирлĕ хутсене кăларчĕ те хĕвне пытарчĕ.

– Хальт! Хендэ хох! – тÿрех темиçен кăшкăрчĕç фашистсем.

Антон тăмарĕ. Тÿрккес алăсем ăна çухавинчен ярса тытрĕç, ура çине тăратрĕç.

– Мĕн тăватăн эсĕ кунта? – ыйтрĕ нимĕççенчен пĕри.

Арçын ача шăпăртах.

– Мĕншĕн чĕнместĕн? Мĕнле салтак эсĕ? Туту çинче аннÿн сĕчĕ те типмен.

– Çын вĕлерекенсем! – кăшкăрса ячĕ Антон.

Фашист ăна питĕнчен çапрĕ. Хĕнесе пĕтернĕскере яла илсе çитерчĕç те сарайне пăрахрĕç. Унта ахаль те пирĕн вунă салтака тата штатри хăш-пĕр çынна хупнă.

Найкăшу, аманнисен аташăвĕ... Ялта – кăшкăрашакан сасăсем. Стена хыçĕнче хуралçă утни илтĕнет. Куç умĕнче – вилекен лейтенант сăнарĕ. Хăвăртрах тарас тата ыттисене те илсе тухса каяс килет. Çапла Антон кунти пĕрремĕш каçа ирттерчĕ. Пĕрремĕш тата юлашки.

## Килте

Тарнă хыççăн виççĕмĕш кунне Антон килне çитрĕ. Хăрушсăр çул шыраса утрĕ. Пĕр ялта ăна штат çи-пуçне тăхăнтартрĕç. Килне çитиччен хăйĕн командирĕн докуменчĕсене пытарчĕ.

Килте мĕн курни Антона пурнăç çине урăхларах пăхма хистерĕ. Арканнă çуртсем, гитлеровецсем хватерсене çаратаççĕ, çынсене нушалантараççĕ. Вăрçă пуçланнăранпах йĕрлекен шухăш каллех пуça килчĕ: «Кĕрешмелле! Кĕрешмелле!» Анчах мĕнле?

Хăйĕн йыснăшĕ Владимир Кочергов каçсерен таçта тухса çÿренине, сĕм çĕрле çеç таврăннине асăрхарĕ Антон. Часах вăл нимĕçсем хупăрласа илнĕ территорире Владимир юлташĕсемпе пĕрле вăрттăн хĕç-пăшал, çар хатĕрĕ пуçтарнине, çакна йăлтах пытарнине пĕлчĕ. Пионер тăванне пулăшма тытăнчĕ.

Пĕррехинче Антон аслă çулпа утса пыратчĕ. Сукмак çине пăрăнсан çĕр çийĕн тĕрлĕ тĕслĕ пралук тăсăлнине курчĕ.

«Телеграфăн, – мĕлтлетрĕ пуçĕнче шухăш. – Çыхăну».

Вăл хуçланакан çĕççине кăларчĕ те пралука касса татрĕ. Гитлеровецсем айăплине чылайччен шырарĕç, анчах тупаймарĕç. Тепрехинче ялта пурăнакансенчен кашни пиллĕкмĕшне персе пăрахассипе хăратса хăварчĕç çеç.

Çак пулăм хыççăн Антон вăрттăн диверси ушкăнне çÿреме пуçларĕ. Унччен пуçтарнă хĕç-пăшала партизансен Железняк ячĕллĕ бригадине пачĕç. Унтан вĕсем взрывчатка тата мина илчĕç. Тупнă снарядсене шăратса хăй тĕллĕн тол (вăйлă взрывчатка) тума та вĕренчĕç. Тĕрлĕрен вырăнта совет листовкисем курăнма тытăнчĕç, унта та кунта нимĕç автомашинисем сирпĕнчĕç, пĕччен çÿрекен фашистсем çухалкаларĕç, çĕрлесерен телеграф тата телефон юписем татăлса анчĕç... Çакна пĕтĕмпех вăрттăн организацирисем турĕç – Антонпа юлташĕсем.

Часах Антон пăравус деповĕнче ĕçлеме тытăнчĕ. Вăл юсав ĕçне хутшăннă хыççăнах пăравус сирпĕнчĕ. Фашистсене тăна кĕме те памарĕç. Каç пулать çеç, унта та кунта взрыв янăрама тытăнать. Чи харсăр таврăнусăсенчен пĕри – Антон Губарев.

## Взрыв

1943 çул. Гитлеровецсем çав-çавах хăшне-пĕрне тытрĕç. Антона та арестлеме пултарĕç. Мĕншĕн тесен унăн кÿрши, Авген Кулеш полицай, арçын ачана кусран вĕçертмесĕр сыхлать. Килте тăванĕсемпе хирĕçнĕ пек «выляса кăтартсан» Антон юлташĕсемпе партизан отрядне тухса каять.

Тăшмана хирĕç харсăррăн çапăçать вăл. Гитлеровецсем чугун çула сыхлама темле тăрăшсан та партизансем чи кĕтмен çĕртен сиксе тухаççĕ, нимĕç эшелонĕсене сирпĕтеççĕ.

...Антон Губаревпа Григорий Карлов черетлĕ задани илчĕç: «вискĕтеслĕхри» чугун çул никĕсне сирпĕтмелле. Каçхине вĕсем палăртнă вырăна вăрттăн йăпшăнса çитрĕç. Юлташсем мина хума хатĕрленнĕччĕ кăна, сылтăм енчен пăравус сывхарнă сасă илтĕнчĕ. Акă вĕсем мина лартса хăварчĕç те тарма пикенчĕç. Анчах вăтăр утăм та каяймарĕç, хăватлă взрыв пулчĕ. Вăйлă хум арçын ачасене аяккалла ывăтрĕ. Темиçе минутран вĕсем тăна кĕме пуçларĕç. Антон çĕкленес терĕ, анчах кĕлетки итлемерĕ, кăкăрĕнче чăтмалла мар ыратрĕ. Антон патне Григорий шуса çитрĕ, унăн та урипе алли сусăрланнă. Вăл юлташне çĕклесе каясшăнччĕ, анчах пултараймарĕ.

– Яла кай, Гриша, кама та пулин пулăшма чĕн. Хăвăртрах... – терĕ Антон. Григорий хăйĕн хыççăн юнлă йĕр хăварса шуса кайрĕ. Икĕ сехетрен ăна, вăйсăрланса çитнĕскере, ялта пурăнакансем асăрхарĕç, пулăшу пачĕç. Анчах Антона хăтарма кая юлнă ĕнтĕ. Ăна гитлеровецсем тытнă.

– А-а, партизан, – чашкăрчĕ нимĕç юнланнă арçын ачана сăнанă май.

Антон самантлăха куçне уçрĕ, кăштах çĕкленчĕ те ирсĕр фашиста питĕнчен юнпа сурчĕ.

– Ак сана!

Тарăхса кайнă нимĕç арçын ачана тапса пĕтерчĕ. Антон тăнне çухатрĕ.

Гитлеровецсем юн юхтарса выртакан пионера икĕ кун асаплантарчĕç. Партизансем çинчен каласа парсан пурнăçне сыхласа хăварма та, урăхла майпа хавхалантарма та шантарчĕç хăйсем. Антон нимĕн те каламарĕ. Вăл нумайлăха тăнне çухатрĕ, аташса калаçрĕ. Тăна кĕрсенех: «Вăрттăннине нимĕн те каламарăм-ши?» – тесе хăраса шухăшларĕ.

Çук, сутмарĕ хăйĕн юлташĕсене Антон. Виççĕмĕш кунне ăна масар çине илсе кайрĕç те персе пăрахрĕç...

Антон Губарев пионер, харсăр партизан çапла вилчĕ.

*Вырăсларан*
*Лариса ПЕТРОВА куçарнă.*

**● АННЕНЕ ПУЛĂШАТĂП**

## Çупа маринадланă купăста

**Çимĕçе хатĕрлеме 2-3 килограмм купăста, 1-2 кишĕр, 3 ыхра шăлĕ, 5-6 лавр çулçи, 1 чей кашăкĕ вĕтетнĕ хĕрлĕ пăрăç илĕр. Маринад валли 1 литр шыв, 1 стакан тип çу, 2 кашăк уксус, çур стакан сахăр, 2 кашăк тăвар кирлĕ.**

Купăстана тăваткăлласа, кишĕре çурма çавракан касăр, ыхрана вĕтетĕр. Пĕтĕмпех хутăштарăр та пăрăç хушăр. Хыççăн савăта пусарса тултарăр. Купăста сийĕсем хушшине лавр çулçи хурăр.

Сахăрпа тăвар янă шыва вĕреме кĕртĕр те çулăма сÿнтерĕр. Тип çупа уксус хушăр. Тăвар шывне çимĕç тултарнă савăта ярăр, хупкăчпа хупласа сивĕниччен тытăр. Унтан сивĕтмĕшре пĕр талăк лартăр.

## «Гомельчанка» салат

**Салат валли 800-900 грамм купăста, 400-500 грамм кăлпасси, çур пуç сухан, 6-7 кашăк майонез, тăвар тата пăрăç кирлĕ.**

Кăлпассине улăм пĕрчи евĕр, сухана çурма çавракан ваклăр. Купăстана вĕтĕ турăр та алăпа çăрса кăштах çемçетĕр. Тăварпа майонез хушса пĕтĕмпех пăтратăр. Апачĕ тутлă пултăр!

## «Тăваткалсем» крекер

**Крекер хатĕрлеме 100 грамм хытă сыр, çавăн чухлех çăнăх, 70 грамм услам çу, 2 кашăк сивĕ шыв, кăштах тăвар илмелле.**

Вĕтĕ теркăпа хырнă сыра çăнăхпа тата услам çупа хутăштармалла. Тĕпренекен чуста çăрмалла. Хыççăн пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн шыв хушса чустана «çыпăçтармалла». 1 сехетлĕхе сивĕтмĕше хумалла.

Вăхăт иртсен чустана çÿхен йĕтĕрлемелле. Тĕрлĕ фигурă (çаврака, тăваткал, виçкĕтеслĕх) касса кăлармалла. Темиçе çĕртен тирсе шăтармалла та формăна хумалла. 200 градуса çити хĕртнĕ духовкăна лартса 8-10 минут пĕçермелле.

## Хăйманран хатĕрленĕ кекс

**Çимĕç валли 200 грамм маргарин е услам çу, çавăн чухлех хăйма, 1 стакан сахăр, 2 çăмарта, çур чей кашăкĕ апат соди, тăвар, 2 стакан çăнăх, 2 пан улми кирлĕ пулать.**

Маргарина ирĕлтерĕр. Савăта сахăр, çăмарта ярса лăкăр та хăймапа, çăнăхпа, апат содипе, унтан сивĕннĕ маргаринпа хутăштарăр. Хуппипе вăрринчен тасатса теркăпа хырнă пан улмие чустана хушăр.

Пулнă хатĕре çу сĕрнĕ формăна ярса 180 градус таран хĕртнĕ духовкăна лартăр. 40-50 минут тытăр. Кекс хатĕр.

**● ХАМĂР ХУШĂРА**

# Мĕне пĕлтерет-ши тĕлĕк?

Ĕлĕк-авалах çынсем тĕлĕксем пирки нумай шухăшланă. Вĕсем мĕне пĕлтернине ăнланасшăн пулса тĕрлĕ калаçу-тавлашу пуçарнă. Тĕлĕк темле асамлă майпа пуласлăха кăтартать, тепĕр чухне мĕнрен те пулин асăрхаттарать те. Çак вăрттăнлăхсене уçăмлатасшăн тăрăшнă та çав вăхăтра. Халĕ вара тĕлĕк мĕне пĕлтернине ятарлă кĕнекере шыраса тупма пулать.

Сăмахран, **çĕр чĕтреннине** куртăр тăк пурнăçра пысăк улшăнусем, кĕтмен хыпарсем пырса тивеççĕ. Çавăн пекех ку сирĕн çывăх çыннăра пулăшу кирлине пĕлтерет. Енчен эсир тĕлĕкре çĕр чĕтреннĕ вăхăтра çынна пулăшрăр пулсан пурнăçра та пĕлĕшĕре е юлташăра кăткăс лару-тăруран хăтăлмашкăн пулăшма тивĕ. Çĕр ура айĕнчен куçнине туйни çемьере хирĕçÿ, харкашу сиксе тухассинчен асăрхаттарать. Çывăх вăхăтрах çемьери тĕп ыйтусене татса пама тăрăшăр. Çĕр чĕтреннĕ вăхăтра эсир муклашка, чул катăкĕсен айне пултăр-и? Ку тăхтамасăр сывлăха тимлĕх уйăрмаллине систерет. Тухтăр патне кайса килни ытлашши пулмĕ. Çакăн пек тĕлĕке эрнекун каçхине курсан ытларах çемьепе пулма тăрăшăр. Килтисем сирĕн хÿтлĕхĕре, тимлĕхĕре туйччăр.



Тепĕр чухне **тĕрлĕ апат-çимĕç те** тĕлĕкре курăнать. Сăмахран, абрикос. Чечеке ларнă çак çимĕç йывăççи нумай ĕмĕтленнине, «пĕлĕтре вĕçнине» пĕлтерет. Сире ыран та паянхи пекех хаваслă, илемлĕ, аван пулассăн туйăнать. Анчах ку ултавлă туйăм. Пурнăç çине урăхларах куçсемпе пăхма вăхăт. Абрикос çимĕçне çини вара тĕрлĕ пăтăрмаха, йывăрлăхсене, кăмăлсăрлăха пĕлтерет.

Пĕли-пĕлми çынсемпе ан калаçăр, вĕсене ан ĕненĕр. Çакна та асра тытăр: сăмаха шансан та чăнлăхне тĕрĕслесе пăхма ан ÿркенĕр. Ку вара юлташăрсемпе, çывăх çынсемпе сирĕн хушăрти хутшăнусене чылай лайăхлатĕ.

**Тĕлĕкре ананас çинине** курни сире пур çĕрте те ăнăçу кĕтессе пĕлтерет. Çĕнĕ юрату хĕмленме пултарать. Чи кирли – çак çимĕçе ытлашши çимелле мар. Ананаса курупкасене пуçтарса хуни ĕçре те ăнăçу кĕтнине, пысăкрах должноçа куçассине пĕлтерет.

**Тĕлĕкре качча тухма ыйтнине** курни пурнăç лайăх еннелле улшăнасса, тăнăçлăх сирĕнпе пуласса. Хăвăра **шурă кĕпепе** курсан чирлес хăрушлăх пур. Шăнса пăсăласран асăрханмалла, сывлăха тимлĕх уйăрмалла. **Çĕрĕ тăхăнса пăхни** – тăвансемпе сирĕн хушăрта хирĕçÿ тухасса. Хĕрупраç пĕрлешнĕ хыççăнхи пурнăçне тĕлĕкре курсан пур çĕрте те ăнĕ. Вĕренÿре çитĕнÿсем тăвăр, экзаменсене те ăнăçлă тытăр. Хăвăра тăлăх арăм пек куртăр-и? Апла ĕç «турти» хушшине васкаса ан тăрăр: эсир ăна пурнăçлаймасса та пултаратăр.

**(Маллали пулать).**

**● ИЛЕМ КĔТЕСĔ**

# Усăллă пыл

**Çак ырă шăршăллă, пылак çимĕç организмри сиенлĕ бактерисене пĕтерекен чи лайăх çимĕçсенчен пĕри шутланать. Кунне 3 чей кашăкĕ пыл çисен иммунитет çирĕпленĕ, ÿт-пÿ йывăрăшĕ те чакĕ. Çак çимĕç тĕрлĕ витаминпа, белокпа, углеводпа, йÿçекпе питĕ пуян. Вăл нервсене лăплантарма, сиен кÿрекен микробсене пĕтерме те пулăшать.**



Косметологире пылпа ĕлĕкренех анлăн усă кураççĕ. Чи илемлĕ патша майри шутланакан Клеопатра та хăйĕн хитрелĕхĕпе хÿхĕмлĕхне сыхласа хăварас тесе унпа усă курни паллă. Пылран хатĕрленĕ маскăсем ÿте лайăх тутлăхлатаççĕ, пÿрлешкесенчен хăтараççĕ, ÿте тасатаççĕ, çутатаççĕ тата ыт. те. Атьăр-ха хăшне-пĕрне эпир те туса пăхар.

Питри шатрасенчен хăтăлма 1 чей кашăкĕ пыла 2 апат кашăкĕ сĕтпе тата çавăн чухлех типĕ çĕпрепе хутăштармалла. Муклашкасем ирĕличчен пăтратмалла. Маскăна пите сĕрсе çур сехет тытмалла та лĕп шывпа çумалла.

Икĕ апат кашăкĕ пыла тата лимон сĕткенне хутăштарăр. Пите сĕрĕр те 15 минутран çуса тасатăр.

Типĕ ÿт валли 1 чей кашăкĕ пыла пĕр апат кашăкĕ олива çăвĕнчен, сĕтрен, сĕлĕ çăнăхĕнчен хатĕрленĕ маска усăллă. Пĕтĕмпех пăтратăр та лайăх çуса тасатнă пите сĕрĕр. 20 минутран ăшă шывпа çăвăнăр.

Çур чей кашăкĕ пыла çавăн чухлех çăмарта саррипе, хăймапа, нимĕрленĕ çур бананпа хутăштармалла. Çимĕçсене лайăх пăтратмалла та пите сĕрмелле. 15 минут тытмалла.

Ку маскăсем ÿте нÿрĕклетме, çемçетме пулăшĕç.

Ÿте тутлăхлатакан маска ăна усăллă япаласемпе, витаминсемпе тивĕçтерет. Çавна май салтак тÿмипе пылтан хатĕрленине туса пăхма сĕнетпĕр. Икĕ апат кашăкĕ типĕтнĕ салтак тÿмин курăкне 100 миллилитр вĕри шывпа тата икĕ кашăк пылпа хутăштармалла. Пулнă шĕвекпе марльăна йĕпетмелле те пит çине хумалла. 20 минутран марльăна илсе нÿрĕклетекен крем сĕрмелле.

Икĕ чей кашăкĕ пыла хуппинчен тасатнă, теркăпа хырнă пĕр пысăках мар панулмипе, пĕр апат кашăкĕ олива çăвĕпе хутăштармалла. Пулнă хатĕре пите çÿхе сийпе сĕрмелле те 5 минут тытмалла. Маскăна сĕтпе йĕпетнĕ мамăкпа тасатмалла.

Пĕр чей кашăкĕ чухлĕ пыла мандаринăн нимĕрленĕ пĕр-икĕ пайăркипе хутăштарăр. Маскăна пите сĕрĕр те 15-20 минут тытăр. Хыççăн ăшă шывпа çăвăр.

## Сĕнÿсем

**Пур хĕрупраç та апат-çимĕç янтăлама юратать. Хăшĕ-пĕри ытларах яшка, теприсем салат, виççĕмĕшĕсем вара тĕрлĕ кукăль хатĕрлеме кăмăлласçĕ. Анчах хăш чухне вăл е ку çимĕçе рецепт тăрăх пĕçернĕ пулсан та темĕн çитмест пек туйăнать. Мĕншĕн-ши? Çак вăрттăнлăхсене пĕлсен килтисем яланах апатпа кăмăллăн юлĕç.**

◈Хăш-пĕр рецептра «пĕр чĕптĕм тăвар», «çĕçĕ вĕçĕпе ванилин» тесе çыраççĕ. Кун пек чухне астăвăр: çак япаласене сахалтарах хушни лайăхрах. Ытларах яни апат тутине пăсать.

◈Купăста кукăлĕ лайăх пиçтĕр тесен духовкăна лартнă хыççăн малтанхи 15 минутра ăна ан уçăр.

◈ Кукăль-çăмах пиçнипе пиçменнине пĕлмешкĕн ăна шăрпăкпа тирсе тĕрĕслемелле. Шăрпăк çумне чуста çыпăçмарĕ тĕк – кукăль хатĕр.

◈ Техĕмлĕ (песочное) чустана вăрах çăрма кирлĕ мар. Унсăрăн вăл хытă пулĕ.

*Нина ЦАРЫГИНА (тел. 56-11-80) хатĕрленĕ.*

Тантăш
47 №, 2014, ноябрь, 20



*Лидия САРИНЕ*

# Кукамайăн сар чăххи

*калав*



Ир-каç çанталăк сулхăн тăрать. Кăнтăрла хĕвел ăшшăн пăхать пулин те кĕркунне çитни çапах та паллă. Çулçăсем саралнă, пилеш çулçи, ав, хĕп-хĕрлех.

Шкултан килсен Толя яланхи пекех кукамăшне пулăшма кайрĕ. Вĕсем халĕ çĕрулми кăлараççĕ.

– Кукамай, кур-ха! – тет вăл тем пысăкăш çĕрулми кăтартса. – Чăн-чăн çын кĕлетки евĕрех.

– Сысна çури пысăкăш-çке ку, – тет кукамăш Толя аллинчи мыскараллă çимĕçе илсе пăхса.

Вĕсем иккĕшĕ те савăнăçлăн кулаççĕ. Çĕрĕ питĕ кăпăшка пирки арçын ача çĕрулмине йывăç кĕреçепе сирпĕтет кăна. Кунтах чăххисем те чаваланса çӳреççĕ. Тăрăшсах тем шыраççĕ, тем сăхаççĕ вĕсем. Ыттисем хушшинче пĕр сап-сарă чăх уйрăмах палăрать. «Урăх сурт» тетчĕ кукамăш ун пирки. Инкубатортан чĕп илсе килнĕ чухне темле ăнсăртран лекнĕ иккен вăл. Ыттисенчен тĕсĕпе илемлĕн уйрăлса тăнăран-ши, Толя çав сар сăмсаллă чĕппе пуринчен ытларах юрататчĕ. Çитĕнсе çитсен пысăкăшĕпе те самаях палăрса тăратчĕ вăл. «Ку чăх çăмарта туса чĕп кăларсан питĕ аван пулмалла та...» – ĕмĕтленетчĕ кукамăш ун çине юратса пăхса.

Анчах вĕсен ĕмĕтленни кăлăхах пулчĕ. Çав чăх çăмартисене курасси пулмарĕ. Вăл çу каçиччен пĕр çăмарта та туса памарĕ.

– Аптрамалла, – ӳпкелешрĕ кукамăш пĕрмай. – Хăй чиперех кăтиклет, анчах çăмартисене йăвара курма çук, таçта тăвать...

Паян вара, çĕрулми кăларса пĕтерсен, кукамăш чăх пусасшăн, мунча хутса кĕресшĕн...

Толя шухăша путрĕ. Пур пĕрех çăмарта тумасть тесе кукамăш çав чăхха пусасшăн мар пуль те? Вăл текех пĕсехине каçартса какаласа çӳреймĕ вара.

– Кукамай! – кăшкăрчĕ Толя çĕрулми аврине пĕр çĕрелле пухакан кукамăшне. – Хăш автанне пусасшăн эсĕ?

– Епле автанне тата? Автанĕсем вĕсем хальлĕхе пурăнччăр-ха, ирхине авăтни те мĕне тăрать.

– Хăш чăххине пусатăн эппин?

– Хăшне пултăр, саррине, паллах. Çăмарта туманнине, – тӳрех каласа хучĕ кукамăш. – Çу каçипе пĕр çăмарта та туса памарĕ те, луччă çавна пусас, çĕрулми кăларса пĕтернĕ ятпа чăх яшки çиес...

Толя пуçне чикрĕ. Нимĕн те тăвайман, хайĕнчен аслисемпе тавлашма хăнăхман вăл.

– Эпĕ чăхсене витене апат парса хупам-ха, унсăрăн тытма çук вĕсене. Кӳршĕри Иван мучисем те паян çĕрулми кăларса пĕтереççĕ, вĕсем те мунча хутасшăн. Пĕрле хутăпăр, – терĕ те кукамăш картишнелле утса кайрĕ.

Çĕрулми йăранĕ вĕçне тухасси нумай та юлмарĕ ĕнтĕ. Унтан шĕшкĕлĕх пуçланать. Шĕшкĕлĕх çумĕнче хăмла çырли тĕмĕсем, унтах çĕмĕртпе пилеш. Ĕçлесе ывăннă хыççăн Тольăпа кукамăш ялан çавăнта ларса канаççĕ. Арçын ачан халĕ те юлашки йăрансене хăвăртрах кăларса пĕтерсе хĕрлĕ, сарă çулçă тăканнă çерем çинче выртса йăваланасси, шĕшкĕ тĕмĕсем айĕнче мăйăр шыраса пăхасси килчĕ. Анчах çав сарă чăх ун пуçĕнчен пĕр самантлăха та туха пĕлмерĕ. Ача ăнсăртран темелле пуçне сылтăмалла çавăрса пăхрĕ. Пăхрĕ те пĕр вырăнтах хытса тăчĕ. Тĕлĕннипе сывлама та чарăнчĕ. Хăй куçне хăйĕн те ĕненес килмерĕ унăн: çĕрулми йăранĕ хушшинче, пысăках мар лупашкара, пĕр купа çăмарта выртать! Пĕр аллă-утмăл та пулĕ унта. Толя пĕшкĕнсе ларчĕ те çав çăмартасене çавăркаласа пăхрĕ. Вĕсем ытти чăхсенни пек шурă мар, темле кăшт сарăрах, кĕренрех тĕслĕ.

– Ак ăçта туса пурăннă вăл çăмартисене! – хĕпĕртенипе сасăпах кăшкăрса ячĕ Толя. Пуçĕнче пĕр шухăш вĕçсе илчĕ: пусмалла мар сарă чăхха!

Вăл çавăнтах аллинчи йывăç кĕреçине пăрахрĕ те картишнелле пĕтĕм вăйран чупрĕ.

– Кукамай! – хыпăнса кăшкăрчĕ вăл ӳке-ӳке чупнă çĕртех. – Кукамай, ан тив сар чăхха!

Вăл пахча алăкне уçса картишне вирхĕнсе кĕнĕ çĕре кукамăш чăхха хăрах аллипе çатăрласа тытнăччĕ ĕнтĕ. Лешĕ, хăйне пусасса сиснĕн, мĕн пур вăйран кăшкăрашать, çуначĕпе çапкалашать.

Çисĕм пек хăвăрт чупса çитрĕ кукамăш патне Толя, унăн çĕçĕллĕ аллине кап ярса тытрĕ. Çав самантра усă курса сарă чăх карчăк аллинчен вĕçерĕнчĕ те усă алăкран пахчаналла вирхĕнчĕ, кăтикле-кăтикле шĕшкĕлĕх айне кĕрсе çухалчĕ.

– Кукамай! – хашлата-хашлата калаçрĕ ача. – Ан тив эсĕ ăна. Тепĕр çул вăл сана çăмарта тата нумайрах туса парĕ-ха. Халь атя-ха манпа!!!

Кукамăш нимĕн ăнланмасăр Толя çине тинкерсе пăхрĕ. Лешĕ ăна аллинчен çавăтрĕ те пахчаналла илсе тухрĕ, çĕрулми ани вĕçнелле ертсе кайрĕ. Лупашкара купаланса выртакан çăмартасене курсан кукамăш икĕ аллине те шарт çапрĕ:

– Ак япала! – унтан пĕр çăмартине тытса куçĕ патнерех илсе пычĕ те çавăркаласа пăхрĕ.

– Ха, епле шултра. Тĕсĕ те урăхларах...

Кукамăш Тольăна кĕлетрен карçинкка илсе килме хушрĕ. Вĕсем çăмартасене пĕрерĕн-пĕрерĕн çав карçинккана хума тытăнчĕç. Хурас умĕн вата çын çăмартасене хăлхи патне тытса силле-силле пăхрĕ. Пăсăлнисем сахал пулчĕç.

– Кукамайăн сар чăххи сар çăмарта тăвать тет, – карçинккине килнелле телейлĕн йăтса утнă май сăвăласа пычĕ Толя.

Каçхине мунча кĕрсе тухрĕç. Мунча хыççăн вĕсем патне Иван мучипе карчăкĕ каçрĕç. Укçине кинеми пĕр чашăк пыл çĕкленĕ. Пурте кĕрекене вырнаçса ларчĕç. Сĕтел çинче тăварланă кăмпа та, рис пăтти те, çĕрулми кукăлĕ те пур. Чи варринче, тăм чашăкра, хайхи сарă чăх çăмартисем.

Кӳршисене кукамăш тутлă апатçимĕçпе хăналарĕ, Толя вара вĕсене чăх çăмартисене мĕнле тупни çинчен каласа кăтартрĕ. Хăнисем сĕтел варринче ларакан тăм чашăкри çăмартасене кула-кулах «кам паттăр» тесе хире-хирĕç шаккаса шуратса çирĕç.

*Исмай ИСЕМПЕК*

# Кукăль

Пĕр класра вĕренекен ачасем Петя Харитонов, Коля Максимов тата Юра Чернов вырсарникун кинона кайма калаçса татăлнăччĕ. Шутланă ĕçе пурнăçлама палăртнă кун вĕсем Чапаев скверĕнче тĕл пулчĕç.

– Малалла, шăпăрлансем! – терĕ юлташĕсене хăйне вĕçкĕнрех тытма юратакан Петя.

Пиллĕкмĕш класра вĕренекен ачасем шăкăлшăкăл калаçса троллейбус чарăнăвне уттарчĕç.

Çула май Петя юлташĕсене «Леня Голиков партизан» кĕнекене çывăрмасăр вуласа тухни çинчен пĕлтерчĕ:

– Ай, маттур пулнă та Леня! Пирĕн тантăш, партизансемпе пĕр хурантан апат çисе пурăннă, вăрманти çĕр пӳртре пĕр шинельпе витĕнсе çывăрнă, фашистсен генералне мĕнле тыткăна илнĕ тата вăл. Чăнлăха юратнă пионер, тӳрĕ кăмăллă пулнă...

Татах та нумай калаçма хатĕрччĕ пулĕ Петя, анчах троллейбус килсе çитрĕ. Ачасем йăпăр-япăр унта кĕрсе кайрĕç.

Кольăпа Юра мала иртрĕç. Кассăна укçа ярса билет илчĕç. Петя анчах билет касси патне туртăнмарĕ. Сарлака пӳллĕ арçын хыçне йăпшăнса тăчĕ те юлташĕсен куçĕнчен çухалчĕ.

Троллейбус «Çеçпĕл» кинотеатр умне çитсен чарăнчĕ.

Ачасем троллейбусран тухрĕç те кинотеатр еннелле уттарчĕç. Унта шурă халатлă илемлĕ хĕрарăм вĕтĕ кукăльсем сутать.

Петя Харитонов киоск умĕнче чарăнса тăчĕ те икĕ кукăль илчĕ. Пĕр кукăльне хăй çиме пуçларĕ, теприне юлташĕсене çурмалла хуçса пачĕ.

– Петя, санăн укçу сахалччĕ-çке, мĕнле майпа кукăль илтĕн? – ыйтрĕ юлташĕнчен Коля.

– Эпĕ троллейбусра перекетлерĕм, – куçне хĕссе илчĕ Петя. – Çийĕр, çийĕр. Коля, эсĕ пылак кукăль юрататăн вĕт.

– Эх, эсĕ те çав. Пылак кукăль... Хăвах çи ăна, – хуравларĕ те Коля ăшă кукăль татăкне Петьăна тавăрса пачĕ.

– Петя петĕлти, çерçи çунат çатăлти. Леня Голиков партизан чăнлăха юратнă, тӳрĕ кăмăллă пулнă... – терĕ Юра Чернов Петьăран тăрăхласа.

Петя юлташĕсем çине айăплăн пăхса илчĕ...

**Николай ТЕВЕТКЕЛ**

## Чĕрере хĕл мар, çулла!

Çил-тăман кĕрлет, улать,
Лашапа пĕр çын тухать çула.
Вăрман витĕр вирхĕнет –
Çĕрлехи улах тĕнче
Хăйĕн ытамне чĕнет
Сивĕ уйăх çутинче.

Çил-тăман улать, кĕрлет,
Чĕмсĕр лавçăпа пĕрле
Тухрăм эпĕ те çула –
Чĕрере хĕл мар, çулла!

**Ӳкерчĕкĕ авторăн.**



# Хавасла 2014 самант

## Сăмахкаçмăш



**Сылтăмалла:** 3. Туристăн «хваттерĕ». 8. «Бухгалтер» тата «Ох, Леха, Леха» юрăсене шăрантаракан. 9. Хорватири хула. 10. Вăтам Азири пушхир. 11. Грузири юханшыв. 12. Кама та пулин шăнман пăр çине лартса хăварни. 13. Кирпĕч. 16. Пĕр-пĕр проекта çĕнсе илнĕ «парне». 17. Мăсăльмансен уявĕ. 18. С.Ротарун юратнă чечекĕ. 21. АПШри штат. 25. Ротор тăванĕ. 27. Вăл кинора В.Шукшин вылянă – «... красная». 28. Çĕпĕрте хатĕрленĕ пулă. 29. Вăл съезд вăхăтĕнче иртнĕ. 30. М.Горькийĕн чăн хушамачĕ. 31. Ылтăн слива. 32. Чăваш сăвăçи. 33. Украинăри футбол команди. 34. Ун çинчен намаза пыма чĕнеççĕ. 38. Ăсчахăн ĕçĕ. 42. Киева пуçарса яракансенчен пĕри. 43. Çĕр айĕнчи бомба. 43. Итали модельерĕ. 46. Кавказри çĕршыв. 47. Вăрнар районĕнчи ял. 48. Вырăс çыравçи. 49. Хими элеменчĕ. 50. Авалхи кĕвĕ инструменчĕ. 51. В.Краснов-Аслин романĕ.

**Аялалла:** 1. Савнине халалланă сăвă. 2. Чăваш космонавчĕ. 3. Азири çĕршыв. 4. Кăнтăр Америкăри вĕçен кайăк. 5. Растворăн тимĕр тĕрекĕ. 6. Ăна балкон айĕнче юрлаççĕ. 7. Бразилири чи пысăк стадион. 14. Кĕвĕ инструменчĕ. 15. Пулă. 19. Çар техники. 20. Панулми сорчĕ. 22. В.Ленинăн шанчăклă юлташĕ. 23. Кĕвĕ инструменчĕ. 24. Ăна Ленинград чăтса ирттернĕ. 26. Раççей космонавчĕ. 27. Машина пайĕ. 34. Çу. 35. Ăна спортсменăн пурнăçлама тивет. 36. Театр пурлăхĕ. 37. Тискер чĕрчун. 38. Пит пайĕ. 39. Вăл А.Абдулов мăшăрĕ пулнă. 40. Раççейри хула. 41. Эй, тăван, ... (юрăран). 45. Пĕр-пĕр чертеж палли.

*Роботсене тĕрĕс лартса тухсан ваттисен каларăшне вуласа пĕлме пулать.*




## Пуçватмăш



**Ăнлантарни:** Ўкерчĕкри саспаллисене (паллах, кирлисене) çаврашкасене вырнаçтарса тухмалла. Енчен те тĕрĕс пулсан, горизонталь тата вертикаль майлă икĕ сăмах вуланать. Варринчи саспалли хăй вырăнĕнчех тăрать.

## Иккĕн утма çăмăлрах, Çул та вĕçленет часрах



**Ăнлантарни:** Çак пуçватмăшри хуравсене кашни клеткăна икшер саспалли çырса пымалла.

**Сылтăмалла:** 3. Сыватмăшри пўлĕм. 4. Сутуçăн ĕç хатĕрĕ. 6. Типографири «саспалли». 8. Х.Уяр романĕ. 10. Унта пуйăссем чарăнаççĕ. 11. Раççейри халăх. 12. Чăваш юрăçи. 14. Вăл Байкалтан юхса тухать. 16. Унта салтак çўрет. 18. Килти выльăх. 19. Кариатида «пиччĕшĕ».

**Аялалла:** 1. Вăл «Ветер с моря дул» юрăна шăрантарнă. 2. Кĕвĕ инструменчĕ. 3. Амазонка юппи. 5. А.Пушкин юмахĕнчи патша. 7. Операторăн ĕç хатĕрĕ. 9. Çурăмĕ çук, хырăмĕ пур (туп.юм.). 10. Савăт-сапа. 13. Упăте. 15. Пĕр-пĕр япалана шантарни. 16. Попугай. 17. Республикăри хула.

***Николай КРАСНОВ*** (Йĕпреç районĕ) ***хатĕрленĕ.***